24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ОКТЯБРЬ
19
ВЫРСАРНИКУН
247 (5962) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Вăрман хатĕрлес ĕçе организацилеме пĕлмелле

Хальхи вăхăтра вăрман промышленноçĕн предприятийĕсем умĕнче тăван çĕршыва вăхăтра, çителĕклĕ тата паха йывăççем парас задача тăрать. Çак задачăна пурнăçлас тесен, вăрман хатĕрлес ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетмелле.

Республикăри Атăл тăрăхĕнчи вăрманпромхозĕ тăван çĕршыв валли йывăç хатĕрлесе парас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Вăл сентябрĕн 1-мĕш тĕлне вăрман касса хатĕрлемелли çулталăк планне тата вăрман туртта-малли плана ытлашшипех тултарнă. Вăрманпромхоз директорĕ Васильев юлташ хăйĕн ĕçне тĕплĕн, пĕлсе, пысăк ответлăхпа туса пырать. Вăрман ĕçлекен рабочисем валли лайăх условисем туса панă. Рабочисемпе работницăсем хушшинче массăллă агитаци ĕçне те йĕркеллĕ туса пыраççĕ. Кашни рабочиех вăрман хатĕрлес плана вăхăтра тултарни çĕршыв оборонине çирĕплетме пулăшнине лайăх ăнланса илнĕ. Халĕ вĕсем тăван çĕршыва кирлĕ йывăça планран иртерсе парас шухăш-кăмăлпа социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Вĕсем Октябрьти революци XXIV çул тултарнă уява производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илес тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Хĕллехи сезонра пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме хатĕрленеççĕ.

Анчах чылай вăрманпромхозсемпе вăрманпункчĕсем хăйсен ĕçне çителĕксĕр туса пыраççĕ-ха. Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Вăрнар вăрманпромхозĕсем вăрман хатĕрлес ĕçе кирлĕ вырăна лартман. Ку вăрманпромхозсенчи руководительсем партин XVIII съезчĕ вăрман промышленноçĕ юлса пынине тĕппипех пĕтермелле тесе хушса хăварнине пурнăçа кĕртсе пымаççĕ-ха. Вырăнти парторганизацисемпе советсен руководителĕсем те вăрманпромхозсемпе вăрманпункчĕсене вăрман хатĕрлес ĕçе вăйлатма, плана ытлашшипех тултарма сахал пулăшаççĕ.

Ĕçре татăклă улшăну тăвас пулать. Плана тултарма чăмантаракан сăлтавсене инженерсемпе, техниксемпе тата малта пыракан рабочисемпе пĕрле тĕплĕн сӳтсе-явса сирсе пăрахмалла. Единоначалине, технологи дисциплинине пур енчен те çирĕплетсе, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пымалла. Рабочисемпе работницăсем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне организацилени кирлĕ. Ĕç дисциплинине пăсакансене ответ тыттармалла, панă ĕçе вăхăтра туса пыман çынсене асăрхаттармалла. Вăрман касакансене, шоферсене, лашапа вăрман турттаракансене плана ытлашшипех тултарма мобилизацилемелле. Ĕç вăхăчĕпе туллин усă курассине организацилемелле. Çак ĕçсене пурнăçланă çĕрте коммунистсемпе комсомолецсен пример кăтартса пымалла. Массăсем хушшинче воспитани ĕçне туса пырасси—коммунистсемпе комсомолецсен чыслă ĕçĕ.

Партипе правительство, хуçалăхĕнче ĕçе çакăн пек организацилемелле: хатĕрлемелли тата турттармалли график кашни кунах, кашни участокра, кашни вăрманпромхозĕнче тулса пытăр, кашни рабочи хăйĕн нормине тултарса ĕçлетĕр, механизмсем хăйсен пĕтĕм вăйĕпе тата пĕр простойсăр ĕçлеччĕр. Çакăн пек тусан ĕç вăрман хатĕрлемелли çулталăк планне эпир ытлашшипех тултарăпăр.

ОТЕЧЕСТВЕННАЙ ВĂРÇАН ГЕРОЙĔСЕМ. **Укерчĕн çинче:** Хĕрлĕ Çар командирĕсен группи. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн вĕсене Совет Союз Геройĕн званине панă. Сулахайран сылтăмалла: старший батальонный комиссар Н. М. Руденко, майор В. И. Малыгин, капитан Н. В. Крюков, старший лейтенант А. П. Дубинец тата майор В. И. Шелкунов.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 17-мĕшĕнче пĕтĕм фронтра противника хирĕç вăйлă çапăçусем малалла пулса пынă. Фронтăн Хĕвеланăç енче уйрăмăнах хĕрӳллĕ çапăçусем пулнă, унта Хĕрлĕ Çăран чăрĕсем тăшман войскисен темиçе хаяр атакине сирсе янă.

Октябрĕн 16-мĕшĕнче противникăнне 28 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 17 самолет пĕтнĕ.

Октябрĕн 17-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 14 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Хĕрлĕ Çар Командованийĕ юлашки сакăр кун хушшинче совет войскисене Одессăран илсе тухас тĕлĕшпе организациленĕ ĕçсем срокра тата питех те йĕркеллĕн вĕçленнĕ. Одесса районĕнче хăйсен задачине пурнăçа кĕртнĕ хыççăн войскăсене пирĕн Тинĕс-Çар флочĕ фронтăн ытти участокĕсене кăтартуллăн тата нимĕнле çухатусăр куçарса çитернĕ. Нимĕçсемпе румынсен войскисем хĕснине пула совет войскисен Одессăран ирĕксĕрех туха каймалла пулнă тесе нимĕçсен радиостанцийĕ саракан сăмахсем сӳя сăмахсем пулса тăраççĕ. Чăннипе илсен, совет войскисене Одесса районĕнчен илсе тухассине Хĕрлĕ Çар Командованийĕ стратегиллĕ тĕллевсене пула йышăннă решени тăрăх тата нимĕçсемпе румынсен войскисем хĕсмесĕрех туса ирттернĕ. Çавăнпа та нимĕçсемпе румынсен войскисем Одесса районĕнче «трофейăсем» тытса илнĕ тесе нимĕçсен командованийĕ пĕлтерни пушă сăмах çапса мухтанни пулса тăрать.

* * *

Украинăри партизансем фашистла захватчиксене сисĕнмеллех пыра-пыра çапаççĕ. Партизансен П. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нумаях та пулмасть нимĕçсен ротине çĕмĕрсе тăкнă. Штык вĕççĕн тытăçса çапăçнă чухне фашистсен салтакĕсене 30 çынна ытла вĕлернĕ. Çак çапăçура А. юлташ, тракторист пулнăскер, уйрăмăнах палăрнă. Вăл пĕчченех 10 фашиста вĕлернĕ.

Р. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ ăнăçлăн кĕрешет. Нумаях пулмасть отряд нимĕçсен Д. ялĕнчи гарнизонĕ çине кĕтмен çĕртен тапăннă. Партизансем фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 40 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 6 пулемет, 9 автомат тата питĕ кирлĕ документсем тытса илнĕ. Темиçе кун иртсен отряд нимĕçсен подразделенине хирĕç ăнăçлăн çапăçнă. Партизансен отрядне çавăрса илме хăтланакан фашистсем пысăк çухатусем туса каялла чакнă. Д. ялĕ патĕнче партизансем фашистсен разведкине пĕтерсе тăкнă. Уйăх çурă хушши çапăçса, партизансем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна ытла, боеприпассемпе горючи тиенĕ 50 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи виçĕ кĕпере тата 8 переправăна взрыв туса сирпĕтсе янă, 13 станковăй пулемет, 22 ручной пулемет тата винтовкăсемпе патронсем нумай тытса илнĕ. Отрядри боецсен шучĕ кашни кунах ӳссе пырать. Отряд лайăх хĕпăшалланнă, унăн патронсемпе ручной гранатăсем нумай. Хăюлăх, татăклăн кĕрешни, çавăрăнăçуллă пулни тата разведкăна лайăх туса пыни Р. юлташ отрядне çапăçусенче ăнăçу тума май параççĕ.

Октябрĕн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра çапăçусем туса пынă. Фронтăн Хĕвеланăç енче уйрăмăнах вăйлă çапăçусем пынă.

* * *

Белоруссин нимĕçсем оккупациленĕ районĕнче партизансен отрячĕсем ăнăçлăн çапăçаççĕ. Отрядсенчен пĕрин командирĕ К. юлташ çыру ярса панă, унта вăл юлашки вăхăтра туса ирттернĕ çапăçусем çинчен каласа парать. Эпир çак çырури уйрăм вырăнсене илсе кăтартатпăр:

«Эпир пуринчен ытларах çĕрле çапăçатпăр. Çакă вăл тăшман çине кĕтмен çĕртен пырса тапăнма тата хамăрăн вăйсем пысăк мар чухне те тăшмана пысăк çухатусем кӳме май парать. Нумаях пулмасть, М. ялĕнчен 4 километрта нимĕçсен обозĕ килсе тухрĕ. Эпир нумайăнах пулман, çапах та обоза пĕтерсе тăкма шут тытрăмăр. Обоз пирĕн пата сывхарса çитсен, эпир ун çинелле команда тăрăх гранатăсен сыххисене 6 сыхă ывăтрăмăр. Обоза сыхласа пыраканнисем хушшинче паника пуçланчĕ. Çавăнпа усă курса, эпир фашистсен салтакĕсене 20 çынна çити вĕлерсе пĕтертĕмĕр. Отрядри боецсем 4 пулемет, 2 миномет, çĕре çити винтовка, 8 автомат тата темиçе пин патрон тытса илчĕç.

Пĕррехинче эпир пралуксене 2 километр хушши татса тăкрăмăр та, пытанса ларса, нимĕçсем килессе кĕтме пуçларăмăр. Вăхăт нумаях та иртмерĕ, линие юсама мотоциклсем çинче фашистсен 5 связисчĕ килсе çитрĕç. Хире-хирĕç пеме пуçласа, эпир фашистсене вĕлерсе пĕтертĕмĕр.

Нумаях пулмасть, отряд нимĕçсен 3 автомашинине атакăларĕ. Хамăрăн стрелоксене тĕрĕс вырнаçтарса туса, эпир фашистсен салтакĕсене 45 çынна çити вĕлерсе пĕтертĕмĕр. Çак кунсенче çул çинче пире çăмăл машина тĕл пулчĕ. Эпир ун çине малтан пĕр черет кăларса ятăмăр, унтан тепре. Машина ăшĕнчен хăраса ӳкнĕ нимĕç офицерĕ сиксе тухрĕ. Вăл отличи знакĕсем темĕн чухлех çакса тултарнă. Вăл вăрманалла тарма тытăнчĕ, анчах та инçех каяймарĕ: хăйĕн мĕнпур орденĕсемпе тата хĕресĕсемпе пĕрлех çĕр çинче выртса юлчĕ. Юлашки 30 кун хушшинче пирĕн отряд нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çын ытла пĕтерсе тăкрĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç тата Гитлер уйăрса лартнă çынсене хирĕç кĕрешессине Францири патриотсем—Парижра пурăнакансем вăйлатсах пыраççĕ.

Парижра антифашистсем гитлерла салтаксемпе офицерсене тăтăшах пĕтере-пĕтере пыраççĕ. Октябрĕн 13-мĕшĕнче Сен-Денире нимĕçсен 2 салтакне вĕлернĕ. Францири патриотсем çав куннех Булонь вăрманĕнче нимĕçсен пĕр офицерне тата 3 салтакне вĕлернĕ. Драншре гитлеровецсен ушкăнĕ çине темиçе граната пенĕ пулнă. Шуазире фашистсен палăрă чиновникне персе вĕлернĕ.

Нимĕçсем валли вооружени хатĕрлекен Парижри предприятисенче пуринче те оборудование çĕмĕресси, хатĕр продукцие пăсасси час-часах пулса пырать.

Мелен районĕнче вырнаçнă хăшпĕр çар предприятийĕсенче брак 50—60 процента çитет.

США-ра Германи агентне тăрă шыв çине кăларнă

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Огайо штачĕн (США) сенат членĕ пулнăскер Берч çапла йышăннă: тĕрĕссипе нимĕç консулĕн заданийĕсене пурнăçа кĕртсе пынă вăхăтра эпĕ Германи правительствин агенчĕ пулса çĕлени çинчен регистрацие çырăнман, çакăншăн эпĕ хама айăплă тесе шутлатăп, тенĕ. Берч Германин Кливленди консулĕ пулса çĕленĕ Каппран 10.000 доллар укçа илнине йышăннă. Капп заданийĕ тăрăх Берч США-ра изоляционистла пропагандăна вăйлăн сарса пынă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Ăмăрту тивлечĕсем

КАНАШ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Вагонсем юсакан заводра двухсотниксен йышĕ кунран кун ӳссе пырать. Уяв ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса рабочисем сменăри заданине 2—3-шер хут тултарма пулчĕç.

Илнĕ обязательствăсене халĕ чылай рабочисем чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Механически цехри токарьсем коммунист В. Гоцуляк, комсомолец Н. Юраков сменăри нормăна нихăçан та 200 процентран кая тултармаççĕ. Октябрĕн 11-мĕшĕнче вĕсем иккĕшĕ те виçĕ норма ытла тултарчĕç. Вĕсем туса кăларакан продукцин пахалăхĕ те аван.

Юлашки вăхăтра Гоцуляк юлташ çĕнĕ детальсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлет. Ку ĕçе те вăл хăвăрт хăнăхса пырать.

Çавăн пекех Козлов, Охрименко, Николаев строгальщиксем те сменăри нормăна 2—3 хут тултарса ĕçлеççĕ.

Фрезеровщик Гурьянов темиçе тĕрлĕ деталь хатĕрлет. Кашни деталĕн ĕç процесĕ ăрасна. Çавăнпа уйрăмăнах пултарулăхпа тимлĕх кирлĕ. Гурьянов юлташăн ку енсем çителĕклĕ вара. Смена хыççăн юлса ĕçлет, нормăна 400 процента яхăн тултарать.

Строгальщик И. П. Павлов станокне ун умĕнхи рабочи çĕмĕрнĕ пулнă. Павлов юлташ завод дирекцийĕпе килĕшсе, станока юсас ĕçе хăй çине илнĕ. Питех те йывăр ĕçе вăл икĕ кун хушшинче тунă. Октябрĕн 13-мĕшĕнче Павлов юлташ хăй юсанă станокпа ĕçлесе, нормăна ытлашшипех тултарнă.

Т. ИВАНОВ.

Ăмăртура мала тухассишĕн

СОВЕТСКОЕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXIV çул тултарнине производствăллă çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ.

Уйкас-Асламаси «Искра» колхоз уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса кĕрхи ĕçсене вăхăтра вĕçлеме, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлама обязательствăсем илнĕ. Кашни колхозникпа колхозница уява пархатарлă ĕçпе палăрса тума тăрăшать.

«Искра» колхоз малтанхи вăхăтра кая юлса пынă пулсан, халĕ вăл малта пыракан колхоз пулса тăчĕ.

Колхозниксем пур ĕçе те фронт интересĕсемпе сыхăнтарса тăваççĕ. Государствăна тĕш тырăсем парса татнă. Çĕрулмине те вăхăтра пуçтарса кĕртсе государствăна леçсе панă.

Колхозниксем хăйсен парăмĕсене вăхăтра пурнăçлама тăрăшаççĕ. Вĕсем уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăннă май, аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, укçа-тенкĕ парăмĕсене ноябрĕн 1-мĕш тĕлне пурнăçлама обязательствăсем илнĕ. Виçĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулти кăларăм) заемăн укçине те çавăн чухнех тӳлесе татаççĕ.

Алла хĕçпăшал тытма пултаракан кашни колхозник вăрçă ĕçне вĕренет. Вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсене, политработниксене тăхăнма ăшă япаласем нумай панă.

Я. СИГАЙ.

Двухсотниксен йышĕ ӳсет

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Древкомбинатри цехсенче Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва сарса пынă май стахановецсемпе двухсотниксен йышĕ ӳссе пыни сисĕнет. Паянхи куна кашни цехрах темиçе вунпăр стахановец-двухсотниксем пур.

Пилĕкмĕш номерлĕ цехра ĕçлекенсенчен август уйăхĕнче нормăна икĕ хут ытларах ирттерсе тултарнисем 10 çын пулнă, сентябрьте вара вĕсен хисепĕ 18 çынна çитнĕ. Цех коллективĕ сентябрь уйăхĕнче ĕç тухăçлăхне 48 процент ӳстернĕ.

Хальхи вăхăтра 5-мĕш номерлĕ цехри рабочисем ăмăртăва татах та анлăн сарса янă. Вĕсем кашниех нормăна икĕ хут ирттерсе тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Тимĕрçĕ А. Парамонов юлташ август планне 224 процент, сентябрьте 252 процент тултарнă. Халĕ вăл виçшер норма тăвать. Унпа пĕрле ĕçлекен молотобоец В. Шайко юлташ та куллен-хи нормăна 2—3 хут ирттерсе тултарать.

Токарь И. Евграфов юлташ кулленхи нормăна 250—300 процент тултарса ĕçлет. Иртнĕ уйăхра вăл плана 222 процент тултарнă.

Сентябрь планне 265 процент тултарнă комсомолец В. Краснощеков юлташ та хăйне панă задание пысăк хастарлăхпа пурнăçласа, ытти сене пример кăтартать. Октябрĕн малтанхи кунĕсенче вăл виçшер норма туса ĕçленĕ, уйрăм заказсем пурнăçлас тĕлĕшпе татах та ытларах ӳсĕмсем туса пырать.

Халь анчах производствăна пырса кĕнĕ хĕрарăмсем те хăйсене панă ĕç нормисене ирттерсе тултараççĕ. Сăмахран, Татьяна Курмаева сентябрь уйăхĕнче çеç ĕçе кĕнĕ. Çапах уйăх планне вăл 121 процент тултарнă. Унпа пĕрле ĕçлеме пуçланă Анна Самышкина та ирттĕнĕ уйăхăн планне ирттерсе тултарнă.

Авăн çапас ĕçе вăйлатмалла

Октябрĕн 15-мĕшне Калинински, Комсомольски, Чкаловски, Çĕмĕрле районĕсем кĕлтесене капана хывса пĕтерчĕç. Тепĕр пĕр-икĕ кунран чылай районсем кĕлте кĕртессине вĕçлеççĕ. Республикăра уй ĕçĕсем вĕçленсе пынă май, авăн çапассине çине тăрсах вăйлатса пырас пулать.

Анчах авăн çапас ĕçе чылай районсенче тивĕçлипе организацилемен. Иртнĕ пилĕккунлăхра мĕн пурĕ те 2 процент ытларах çеç ӳсĕм пулнă. Çĕмĕрле районĕ кĕлтесене тахçанах капана хывса пĕтернĕ, апла пулин те, авăн çапассипе юлса пырать.

Çĕрулми кăларса пĕтереççĕ

Республикăра çĕрулми кăларас ĕç вĕçленсе пырать. Октябрĕн 15-мĕш тĕлне Хĕрлĕ Чутай, Комсомольски, Çĕрпӳ, Шупашкар, Чкаловски, Шăхасан, Çĕмĕрле, Елчĕк районĕсем çĕрулми кăларса пĕтернĕ. Çĕрулми кăларас ĕç Улатăрпа Йĕпреç районĕсенче çеç кая юлнă. Çак районсем октябрĕн 15-мĕш тĕлне çĕрулмине суррине те кăларман.

Комсомолецсем хĕрӳ ĕçре

ЕЛЧĔК. «Октябрь» колхозри комсомолецсем колхоз производствинче тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем кĕлтесене турттарса капана хыврĕç. Унтан çĕрулми кăларчĕç. Халĕ хĕрсе авăн çапаççĕ.

Колхозница А. Исаевăн упăшки фронтра фашистсене хирĕç çапăçать. А. Исаева колхоза пĕр кун сиктермесĕр ĕçлеме тухать. Вăл хăйĕн те, упăшкийĕн те ĕçлеме тăрăшать. Исаева пек хастарлă хĕрарăмсем колхозра сахал мар.

А. ЧЕРНОВ.

Шупашкар хулинчи наукăпа искусство работникĕсен фашизма хирĕçле митингĕ

Ĕнер Шупашкар хулинче наукăпа искусство работникĕсен фашизма хирĕçле митингĕ пулса иртрĕ.

Митингра республика столицинчи малта пыракан ученăйсемпе наука работникĕсем, писательсемпе художниксем, артистсемпе композиторсем халĕ тăван çĕршыв умне пысăк хăрушлăх тухса тăнă кунсенче хăйсем совет халăхĕн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн пĕр шухăш-кăмăллă пулса çапăçăва тухма тупа турĕç.

Митинга аслă шкул работникĕсен союзĕн Обком председателĕ **Яковлев** юлташ уçрĕ.

Пединститут преподавателĕ **Железнов** юлташ совет ученăйĕсен фашизма хирĕçле Мускаври митингĕ чĕнсе каланине вуласа панĕ.

Трибуна çине пĕрин хыççăн тепри профессорсем, доцентсем, артистсем, писательсем, художниксем тухаççĕ. Вĕсем совет çĕршывĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă интеллигенцине пĕр шухăш-кăмăллă пулса, фашизма пуçĕпех çапса аркатиччен кĕрешме — хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăя хурса пулăшма сăмах параççĕ.

— Гитлер нумай «çĕнтерӳсем» турĕ, —тет ялхуçалăх институчĕн доценчĕ физиологи наукисен кандидачĕ **Плетнев** юлташ.—Анчах унăн çĕнтерĕвĕсем—супăнь хăмпи, Пирр çĕнтерĕвĕсем кăна. Çĕнтерӳ пĕрре пулĕ—вăл пирĕн Хĕрлĕ Çăран, пĕтĕм совет халăхĕн çĕнтерĕвĕ пулĕ.

Малалла Плетнев юлташ ялхуçалăх институчĕ хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ йĕркепе урăхлатса çĕнетсе пыни çинчен, студентсем çар специальноçĕсене вĕренсе алла илни çинчен, пĕтĕм институт коллективĕ, кирлĕ пулсан, алла хĕçпăшал тытса тăвани çĕршыва хӳтлеме тухма хатĕрри çинчен пĕлтерет.

Профессор **Чемолосов** совет ученăйĕсем умĕнче тăракан паянхи питех те ответлă ĕçсем çинчен каларĕ.

Искусство работникĕсем — артистсем, композиторсем совет халăхне отечественнăй аслă вăрçăра пулăшу пама мобилизацилеммĕ тесе пĕлтерчĕ РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ **Б. Алексеев** юлташ.

— Паянхи кун,—терĕ вăл,—пирĕнтен, искусство работникĕсенчен, пĕтĕм пултаруллăха, пĕлӳлĕхе хурса ĕçлеме ыйтать. Искусство—фронтăн!

Чăвашсен педагогика институчĕн профессорĕ **Лурье** хĕрӳллĕ те хумханнăлă сăмах тухса каларĕ.

— Хăйĕн салтакĕсен виллисем урлă, пиншер хĕрессен вăрманĕ витĕр, юн кӳллисем урлă килекен ирсĕр тăшман тирĕн тăван çĕршыв чĕрине—Мускава тĕллет, пирĕн кашни совет çыннин—рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, хĕрарăмсен, ачасен чĕрине тĕллет. Çук, ку вăл урса кайнă тăшманăн хура ĕмĕчĕ кăна. Вырăс халăхĕ нихăçан та чура пулман, пулас та çук!

Малалла чăваш поэчĕ **Аркадий Эсхель**, РСФСР шкулăн тава тивĕçлĕ учителĕ **А. Черпакова**, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ художник **М. Спиридонов**, пединститут доценчĕ биологи наукисен кандидачĕ **З. Миловидов** юлташсем тухса каларĕç.

Чăваш АССР халăх поэчĕ орденоносец **Н. И. Шелеби** хăйĕн фашизма хирĕçле сăвăвине каласа панĕ. Митинга пухăннисем поэта пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç.

Октябрьти революци хыççăн ӳссе çитĕннĕ çамрăк интеллигенцирен инженер **Головко** юлташ тухса каларĕ.

Юлашкинчен митингра тухса калана ученăйсем, писательсен, артистсемпе художниксен шухăш-кăмăлĕсене пĕтĕстерсе, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ **Федоров** юлташ тухса каларĕ.

Митинг Совет Союзĕнчи ученăйсем чĕнсе каланине пĕр кăмăллă пулса резолюци йышăнчĕ.

Совет ученăйĕсемпе искусство работникĕсем, хамăрăн ĕçе пĕтĕмпех фронт интересĕсене пăхăнтарар! Хамăрăн пĕтĕм вăй-хăватпа пултарулăха çĕнтерӳ тунă çĕре парар!

Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать. Тăшмана çапса аркататпăрах!

Çапла пулчĕ митинга пуçтарăннă наукăпа искусство работникĕсен шухăш-кăмăлĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă туммтирсем

ЭЛЕК. Вырăс Сурăмĕнчи «Доброволец» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшаççĕ. Ф. Морозовпа Д. Кошкин юлташсем пĕрер тир, пĕрер мăшăр чăлха, алтишсем пачĕç. Паянхи куна колхоз 67 тир, 39 килограмм çăм, 9 мăшăр чăлха, 5 мăшăр алтиш, 2 мăшăр çăмата, 10 çĕлĕк районри пункта леçсе панă.

Ник. СМИРНОВ.

ПУРНЕ ТЕ ÇАР ЁÇНЕ ВЁРЕНТЕССИ

Çамрăк патриот, çар ёçне çине тăрса вёрен!

Октябрён 1-мёшёнче хуласенче, ялсенче—пур çёртте те обязательнăй йёркепе çар ёçне вёренесси пуçланчё. Совет Союзёнчи граждăнсем занятисене пысăк сёкленӳпе кётсе илчёç, мёшён тесен Хёрлё Çар валли вёренё, квалификацилле воинсен резерви кирлине халăх лайăх пёлет. Халăхăн сёкленёвё çар ёçне вёреннешкён организованно пуçлама пулăшрё.

Ку тёлёппе комсомол организацийёсем те чылай ёçлерёç.

Калинински районра çар ёçне вёренме пуçличчен комсомолецсем вёренме кирлё хатёрсене, пособисемпе литературăсене шута илсе тухнă, вёренӳ пункчёсене йёркене кёртнё. Комсомолецсен вăйёпе 152 винтовка, 160 граната тунă, 4 комсомолеца политруксен заместителёсем пулса ёçлеме уйăрнă. Оборонăн Государственный Комитечён постановленине комсомолецсемпе çамрăксен пухăвёсенче сӳтсе-явнă. Ун хыçăн агитаторсем постановлени çинчен халăха ăнлантарса парас тёлёппе ёçленё.

Çакăн пек хатёрленӳ ёçне ытти районсенчи организацисем те туса иртернё.

Первомайски районра тăватă вёренӳ пункчё. Балабаш-Нурăсри пункта Кириллов комсомолец ёртсе пырать. Ку пункт районри дăтартуллă пункчёсенчен пёри шутланать. Ана лайăх илемлетнё. Малтан вёренме макетсем çителёксёр пулнă. Комсомолецсем ёçе тытăннă та часах 150 винтовка, 15 граната туса хунă. Г. Уткин комсомолец станковăй пулемет тата танк тунă. Ку пунктра икçёр сын ытла вёренет. Дисциплина çирёп, занятисене кая юлса сӳрекенсем пачах çук. Политрук заместителё пулса Тихонов комсомолец ёçлет. Вăл вёренекенсене тăтăшах хаçатсенчи хыпарсене вуласа парать, Информаци Бюровён пёлтерёвёсемпе паллаштарать. Юлашки хыпарсен витринине тунă, «Боевой листок» ятлă стена хаçачё тухса тăрать. Халё пурё 4 номер тухнă. Вёренӳ çавăн пек организованно пуçланни çинчен калакан примерсем республикăра нумай.

Анчах всевобуч пынă малтанхи икё ернери опыт çак маха ёç çине пур çёрте те мар кирлё пек çавăрăнса пăхнине кăтартрё. Хăшпёр çёрте çар ёçне вёрентесçине пётёмёшпех çар комиссариачёсем çине çӳнтернё.

ВЛКСМ Кувакино райкомё вёренӳ ёçёнче кирлё макетсене хатёрлессипе нимён те туман. Райком секретарё Павлов юлташ камсем тата миçе комсомолец командирсем пулса ёçленине те пёлмест. Всевобуч çине çавăн пек пăхнине тӳсме çук, вăл пирён хушăра пулмалла мар. Всевобуч—комсомолăн ёçё, Оборонăн Государственный Комитечён постановленине пурнăçлас тёлёппе комсомолецсен активлăн ёçлемелле.

Кашни подразделенирех политруксен заместителёсем пур. Политрук заместителёсем — комсомолăн всевобучри представителёсем. Вёсене комсомолец-активистсенчен политика тата çар ёçё тёлёппе хатёрленсе çитнё юлташсене уйăрса, кашнинех ВЛКСМ райкомён бюровёнче çирёплетеççё. Райкомсем политрук заместителёсен ёçёсемпе интересленмелле, вёсене кулленхи ёçре пулăшмалла.

Çар ёçне вёренмелли программăна занятисене сиктермесёр сӳресен çеç тёплён ăнланса юлма пулать. Анчах хăшпёр районсенче çавна шута илменха. Ишлей районёнчи Ишекри вёренӳ пунктёнче октябрён 12-мёшёнче занятие пыманнисем пулнă. Вёсенчен иккёшё комсомолецсем. Ку факт районри организацин руководителёсене интереслентермелле пек туйăнать. Çук, ВЛКСМ райкомё ку тёлёппе нимён те туман. Первомайски районри «Красная Чувашия» колхозри пуçламăш организацин секретарё Юркин юлташ занятисене каярах юлса çитет. ВЛКСМ райкомён секретарё Фомин юлташ ун çинчен пёлсе тăрать пулин те нимёнле мера та йышăнман.

Всевобучри йёркесёрлёхсене тёппипех пётермелле. Комсомолецсен организованность, дисциплина тёлёппе пурне те пример кăтартса пымалла. Кăшт çеç те пулин йёркене пăсакан комсомолецсемпе ним хёрхенӳсёр кёрешмелле.

Çитес кунсенче çар ёçне вёренме кирлё материальнăй базăна йёркелессине, пӳлёмсене, кабинетсене, пунктсене илемлетессине вёçне çитермелле.

Çамрăк патриот—всевобучăн боецё! Вёренӳре яланах организацилле тул, дисциплина тёлёппе пример кăтарт! Вăрçă ёçне çине тăрса вёрен!

П. МИХАЙЛОВ.
ВЛКСМ Обкомён секретарё.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. **Укерчён çинче:** Н-ски чăрши кёçён лейтенант П. Д. Гавриленков командир пулса ертсе пыракан разведчиксен группи атака пуçламалли рубежа куçать. (Çурçёр-Хёвеланăç енё).
Р. МАЗЕЛЕВ фотоӳкерчёкё. (ТАСС фотохроники).

Пур ёçе те вăрçă вăхăтне тивёçлё туса пымалла

Пирён республикăри колхозсем, колхозниксем тата пётём ёççыннисем пёр ёмётпе, тăван çёршыв оборонин хăватне тёреклетсе пыни урлă Германи фашизмне çапса салатас ёмётпе пурăнаççё. Вёсем государство умёнчи обязательствăсене срокран маларах пурнăçласа, юратнă Хёрлё Çарпа Тинёс-Çар Флотне кирлё таранах ялхуçалăх продукчёсем парса тăма тăрăшаççё. Нумай колхозсем государство умёнчи обязательствăсене, тырпула пухса кёртме тухичченех, иртнё çулхи культурăсене парса пурнăçларёç. Шăмăршă районёнче 16 колхоз 1941 çулшăн аш-какай парса татнă, çăмарта обязательствине 5 колхоз пурнăçланă. «Мотор», «Новая деревня», «Победа», «Искра» тата Ворошилов ячёпе тăракан колхозсем государствăна сёт-сӳ парса татрёç. Чылай колхозсем хăйсен умёнчи обязательствăсене ăнăçлăн тултарса пыраççё. «Новая деревня» колхоз çак çулшăн аш-какай, çăмарта, çăм, утă обязательствисене пётёмпех тултарнă. Шăхасан районёнче те государство умёнчи обязательствăсене ăнăçлăн тултарса пыракан колхозсемпе колхозниксен тата единоличниксен ӳшё ӳссе пырать. Анчах хăвăртлăха пёр вăйсăрлатмасăр ёçлесе пыни кирлё. Çавăнпа та ёнтё ялхуçалăх продукчёсене хатёрлес енёпе хатёрлев организацийёсен çеç мар, ялсовет исполкомёсемпе колхоз председателёсен те çине тăрсах ёçлемелле. Апла пулин те, хăшпёр районсенче ялхуçалăх ёçёсене государство умёнчи обязательствăсене пурнăçлассипе таччăн сыхăнтарса пымарёç. Çакă вăл уйăмăнах кёлтесене капана хывасси авăн çапас ёçне пёр тан пулса пыманнинче сисёнчё. Çавăн пекех, уйрăм колхозсенче государствăна тырă парса татмасăрах колхозăн шалти нушисем валли ытлашши тырпул салатни те тырпул хатёрлев планне йёркеллё тултарса пыма чăрмантарса пычё. Куславкка районёнчи Тёрлемес, Кошка тата Казаковски колхозсенче государствăна леçсе панă тырă шутёнчен 75 процентне хăйсен нушисем валли расходланă. Çакăн пек тёслёхсем Пăрачкавăпа Улатăр районёсенче те пулкаланă.

Государствăна таса тата типё тырă памалла. Апла пулин те, хăшпёр колхозсем çак йёркене тӳрремёнех пăсса пыраççё. Шупашкарти тырпул йышăнакан пункта çёнё тырă килме пуçланăранпа чёрё тырă тиесе килнё тёслёхсем нумай пулнă. Паллах, чёрё тырă тиесе килнё лавсене каялла тавăрса янă. Çакăн пек тёслёхсем малашне ан пулччăр тесен, государствăна памалли тырпула малтанах типётсе хатёрлес пӳлать.

Партипе совет тата хатёрлев организацийёсен ялхуçалăх продукчёсене хатёрлес плана вăхăтра тултарассишён кёрешмелле. Кашни колхозăн, кашни колхозникпа единоличник хуçалăхён фронтпа Хёрлё Çар валли ялхуçалăх продукчёсене ытлашшипех парса тăма тăрăшмалла. Аш-какай, сёт-сӳ, çăмарта тата ытти обязательствăсене те срокран маларах тултарассишён кёрешмелле. Колхозсенче халь пахча-çимёçсем пуçтарса кёртрёç. Халех, пёр кун иртнё тёсёр, çак çимёçсене типётме тытăнас пулать. Ку тёлёппе Шупашкар районёнчи «Ильич» колхоз лайăх тёслёх кăтартса ёçлет. Ку вăхăтчен «Ильич» колхоз 2 центнер пахча-çимёç типётнё. Вăрнар районёнчи «1-ое Мая» колхоз 1,2 центнер сухан типётсе хатёрлев организацине леçсе панă. Калинински районри «Броневик» колхоз та икё центнера яхăн пахча-çимёç типётсе панă. Çак асăннă колхозсенче пахча-çимёç типётес ёç халё те ăнăçлăн пулса пырать. Хёрлё Çарпа Тинёс-Çар Флотне кирлё таранах пахча-çимёçсем парса тăрас пулсан, пур колхозсенче те халех пахча-çимёçсене типётессине организацилес пулать.

Вăрçă вăхăтёнче кашни килограмм çăкăр, аш-какай, çёрулми хаклă. Çавăнпа та вёсене лайăх пăхса усрамалла тата перекетлён тытăламалла.

Д. МИТЬКОВ.
СССР Наркомзагён Чăваш республикинчи уполномоченнийё.

Выльăх-чёрлёх ёрчетмелли плана тултарнă

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Иртнё çулччен «Восход» колхозăн фермисенче ёç дисциплини çирёп вырăнта пулман. Фермăра ёçлекенсем час-часах улшăнса тăнă. Çавна пула колхоз выльăх-чёрлёх ёрчетмелли плана та йёркеллё тултарса пыма пултарайман. СССР Совнаркомёпе ВКП(б) Центральный Комитечё «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чёрлёх продуктивлăхне ӳстернёшён колхозниксене ёçшён хушса тӳлесси çинчен» постановлени кăларнă хыççăн кăна фермăра ёçлекен работниксем хушшинче дисциплина çирёпленнё. Фермăсене ялан ёçлекен кадрсемпе çирёплетнё, вёсем хушшинче социализмлă ăмăртăва сарса яма пулăшнă. Кашни работник хăй ёçлекен участокшăн ответлă пулса ёçлессине ӳстернё. Çакă ёнтё выльăх-чёрлёх шутне ӳстерме нумай пулăшнă. Октябрён 1-мёш тёлне колхоз выльăх-чёрлёх ёрчетмелли плана ытлашшипех тултарчё. Государствăна аш-какай срокчен парса татнă. Кунсăр пуçне, районри колхозсене 25 пуç выльăх сутнă. Тăхăр уйăх хушшинче 13 пин тенке яхăн таса тупăш илнё.

Колхоз икё утар тытса тăрать, вёсенче 175 çемье хурт шутланать. Çак хуртсенчен кăçал 25 центнер ытларах пыл илнё.

Колхозниксем общественнăлла выльăх-чёрлёхсене лайăх хёл каçарма çине тăрсах хатёрленеççё. Строительство бригади 40 пуç ёне валли вите туса пётернё, кивё витесене юсаса ăшăтнă.

Я. ЛУКИН.

Выльăх-чёрлёхрен илнё тупăш

Сёнтёр районёнчи «Колос» колхоз общественнăлла выльăх-чёрлёхрен çуллинех пысăк тупăш илет. Планпа пăхнă тăрăх колхозăн кăçал 25 пин тенкё тупăш илмелле пулнă пулсан, октябрён 1-мёш тёлне 28.500 тенкё илнё. Ку шута оборона фондне панă продукцисем кёмеççё.

Колхоз выльăхсене хёл каçарма лайăх хатёрленнё, витесемпе картасене вăхăтра юсаса ăшăтнă. Выльăх апачёсене те кирлё таранах хатёрлесе хуçалăхсем ӳстерсе илнё. 150 тонна силос хывнă. Выльăх-чёрлёх ёрчетмелли плана пур выльăхсем енёпе те тултарнă. План тăрăх çулталăк вёçне 80 пуç сурăх пулмалла пулнă пулсан, халё вёсем 130 сурăх ытла усраççё. Чăх-чёпсене планпа пăхнинчен 120 штука, сысна 10 пуç ытлашши усраççё. А. Плотников юлташ 7-мёш çул ёнтё выльăх-чёрлёх пăхнă çёрте ёçлет. Кăçал вăл 34 пăру пăхса ӳстернё. А. Максимова юлташ 56 путек ӳстернё.

С. МАМАЕВ.

Кишёр, сухан параççё

ÇЕМЁРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Районри колхозсем государствăна пахча-çимёçсем парассине вăйлатсах пыраççё.

Егоркинăри «Большевик» колхозăн план тăрăх кăçал государствăна 3,72 центнер кишёр памалла, халь вăл 9,73 центнер тата 3 центнер помидор панё. Тукаври «Комбинат» колхоз 12,14 центнер кишёр вырăнне 26,28 центнер тата 10,50 центнер сухан панё.

Тăван ялсоветёнчи Буденный ячёпе тăракан тата «Ударник» колхозсем те кишёр памалли плана ытлашшипех тултарчёç. Хутарти Ленин ячёпе тăракан колхоз çак кунсенче 50 центнер ытла купăста панё.

Х. ЛИСИН.

Çёрулми вырăнне сухалана

Çёмёрле районёнчи Пояндайкино колхозё çёрулмине вăхăтра пухса кёртсе хранилищёсене хывнё. Ку ёçре туллимар вăтам шкулта вёренекен ачасем колхоза чылай пулăшрёç, вёсем 10 тоннăна яхăн çёрулми кăларса панă. Çулталăк вёçне 80 пуç сурăх пулмалла пулнă пулсан, халё вёсем 130 сурăх ытла усраççё. Чăх-чёпсене планпа пăхнинчен 120 штука, сысна 10 пуç ытлашши усраççё. А. Плотников юлташ 7-мёш çул ёнтё выльăх-чёрлёх пăхнă çёрте ёçлет. Кăçал вăл 34 пăру пăхса ӳстернё. А. Максимова юлташ 56 путек ӳстернё.

С. МАМАЕВ.

Çар ёçне вёренесси ăнăçлăн пырать

Çар ёçне вёренме организацилеме пунктсенче занятисем ăнăçлăн иртсе пыраççё. Кашни боец, çёршыв умне килсе тухнă хăрушлăха туйса, никенсе вёренме тăрăшать.

Ишлей районёнчи центрёнче икё пункт ёçлет. Боецсем дисциплинарнăй устава, противогаза вёренсе çитнё. Тепёр заняти хыççăн стройра сӳрес енёпе те программăра кăтартнă чухлё пёлӳ илеççё. Халё взводсенче тактикăлла занятисем пулса иртрёç.

Теорилле занятисем иртнё çулта пӳлёмсем уйăрса панă. Унта халăхи условисенче тăшмана хирёç çапăçмалли хёпăнăлсен макечёсем: противогаз, станковăй пулемет, винтовка, граната пайёсене тёплён каласа параканнисем тата кучухнехи вăрçăра вёсемпе мёнле усă курмалли çинчен калакан плакатсем пур. Çав пӳлёмрех—çар ёçё çинчен çырнă кёнекесен библиотеки.

Ишлейри икё пункчё те 110 сехетлё программăра кăтартнă предметсене «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вёренме пулса пёр-пёринпе ăмăртăва тухнă. Вёсем обязательствăсене пурнăçласа пыраççё. Иртнё занятире 1-мёш взвод винтовка чаçёсене салатса пуçтарас енёпе отлично вёренине кăтартса панё. Взвод командирё Семенов юлташ винтовка чаçёсене пёрин хыççăн тепёрне алла илсе ытлашши пачё, боецсем пурте хăвăрт ответлерёç.

Всевобуч пункчёсенче докладсемпе калаçусем те пулаççё. Боецсем хушшинче политинформацисем ирттереççё.

Взводсемпе отделенисен ăмăртăвёнче коммунистсем пример кăтартаççё. Уйрăмăнах Антонов, Костров, Петров, Белов, Мамутин, Федоров тата ытти-сем те примерлă боецсем пулса тăраççё.

С. ГОРЛАНОВ.

Тăрăшса вёренеççё

КАНАШ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Пурне те обязательнăй йёркепе çар ёçне вёрентес тёлёппе районра 9 пункт ёçлет. Вёсенчен виççёмёш хулара, ултăшё ялсенче.

Халăха çар ёçне вёрентессине уйрăмăнах Асхва участокёнче лайăх йёркеленё. Вёренме тивёç сынсем пурте çӳреççё. Вёсем çар ёçне пысăк сёкленӳпе кётсе илчёç, мёшён тесен Хёрлё Çар валли вёренё, квалификацилле воинсен резерви кирлине халăх лайăх пёлет. Халăхăн сёкленёвё çар ёçне вёренмешкён организованно пуçлама пулăшрё.

Всевобучри йёркесёрлёхсене тёппипех пётермелле. Комсомолецсен организованность, дисциплина тёлёппе пурне те пример кăтартса пымалла. Кăшт çеç те пулин йёркене пăсакан комсомолецсемпе ним хёрхенӳсёр кёрешмелле.

Çитес кунсенче çар ёçне вёренме кирлё материальнăй базăна йёркелессине, пӳлёмсене, кабинетсене, пунктсене илемлетессине вёçне çитермелле.

Çамрăк патриот—всевобучăн боецё! Вёренӳре яланах организацилле тул, дисциплина тёлёппе пример кăтарт! Вăрçă ёçне çине тăрса вёрен!

П. МИХАЙЛОВ.
ВЛКСМ Обкомён секретарё.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончёсенче

Тёрёслӳ кунёсем

Халăх—ача мар. Халăх—çитённё çирёп çын. Чăнлăх çине вăл тӳррён пăхать. Тёрёслӳ кунёсем çитрёç. Хёрлё Çар çёршыв чёрине хăйён кăкăрёпе хӳтлет. Атăлпа Дон, Днепрпа Енисей ывăлёсем тăшман атакисене сире-сире ярасçё. Кашни боец пёлет: хыçра — Мускав.

Юнпа шӳнё хирсем çине малтанхи юр ӳкет: вăл Гитлера сроксем çинчен асăрхаттарать. Мёншён васкать-ха Гитлер? Мёншён-ха вăл хăйён дивизийёсене вут-кăвар айне вăркăнтарать? Вăл кётсе тăма пултараймасть. Вăл вылява çуркуннене хăварма пултараймасть. Вăл хăйён шăнакан ефрейторёсене вырăс кёрчёсем хушшинче хёл каçма хăварма пултараймасть. Унăн халех, çийёнчех, сасартăках çёнтермелле. Пёр кун тăхтаса тăни те ăна вăйлăн пырса çапать. Эпир çёнсе илнё кашни çёнё кун çёнтерӳ патне утăм туни пулать.

Вязьма патёнче тăшман атакине алăри гранатăпа çапа-çапа сирсе яракан боец пёлет: вăл пёччен мар. Унăн юлташёсем нимёçсене Мелитополь патёнче çапаççё. Унăн юлташёсем нимёçсене Мурманск патёнче çапаççё. Ленинградпа Одесса геройёсем икё уйăх хушши çитё тăшман хёссе пынине сире-сире ярасçё. Хёвелтухăçёнчен çёнёрен те çёнё чаçсем килсе тăраççё. Çапăçăва çёнёрен те çёнё полксем кёреççё: çакă вăл—тинёс çинчи пёрин хыçăн тепри килекен хумсем пекех. Тинёсе шыв çуркипе йăсса пётерме çук, çавăн пекех нимёçсем те Российăна çёнтереймёç!

Гитлера хирёç пётём тёнче çапăçать. Пирён фронт Исландирен пуçласа Ирана çитиччен, Шпицбергенран пуçласа Тобрука çитиччен тăсăлакан гигантла фронтăн пёр пайё кăна. Паян, пиншер нимёçсем Брянск вăрманёсенче вилевиле выртнă вăхăтра, гитлеровецсен йăви çинче, Нюрнберг çинче, англичансен çёршер бомбардировщикёсем вёçеççё. Орел хулинчи пушар çине Бременри тата Кельни пушарсем ответлеççё. Гитлер октябрён 2-мёшёнче хăйён салтакёсене: «Çакă — юлашки çапăçу» тесе пёлтернё. Çакăн пек каласа вăл нумай хутчен илёртнё, анчах кашнинчех вăл улталанă. Гитлер уйрăм çапăçусенче çитёнӳ тума пултарать, анчах пётём вăрçăра вăл çёнтерме пултараймасть. Урса кайнă йытă пекех вăл шывран хăрать: океан тăрăх—пирён пата тата Англие снарядсем килсе тăрать. Американецсем уйăхсерен 5-шер пин самолет туса кăларасçё. Çакă вăл—тепёр уйăхран 5 пин çёнё бомбардировщик Германи çинче вёçессине пёлтерет. Вăхăт—пирён союзник. Вăхăт—Гитлерăн хаяр тăшманё.

Тăшман Мускав патнелле талпăнать. Столица шăпине танксем кăна мар татса параççё, ăна кашни боецăн çирёплёхё те татса парать. Хăравçă чунлă пулни сăрт-тусем урлă каçакан çула та тăшманăн уçса пама пултарать. Хăюллă та паттăр пулни пёчёк юханшыва та тăшман каçмалла мар туса хурать. Кашни боецăн чёри крепость пулса тăмалла.

Гитлер Лондона илесшён пулнă. Анчах вăл Лондона илме пултараймарё. Нимёçсем çапла каласçё: «Пире Ла-Манш чăрмантарчё», теççё. 40 километр сарлакёш выртакан шыв Гитлерăн дивизийёсене чарса лартрё. Пирён Хёрлё Çар Ла-Манш пулса тăмалла—тăшман каçма пултарайми хӳме пулса тăмалла. Вёсем çулпа куçса килеççё. Çав çул вăл Мускава килекен çул. Çав çул тăшманăн вилём патне каймалли çул пулса тăмалла

Илья ЭРЕНБУРГ.

(«Красная Звезда» хаçат, октябрён 14-мёш).

Манăн взвод „чёлхесем“ тупни

Çёршыв кунта лачакаллă, çырмаçатраллă, С. кӳллипе И. кӳлё хушшинче хыр вăрманё выртать. Пирён Хёрлё Çар кунта тăван çёршыва паттăрăн сыхлать, кунён-çёрён геройла çапăçать. Çак вăрçă фрончён пёр участокёнче ытти чăвашсемпе пёрле эпё те çапăçатăп.

Сентябрь уйăхён пёр каçёнче батальон командирё капитан Елисеев мана хăй патне чёнсе илсе ответлă задани панё. Эпё капитан приказне хаваласпах йышăнтăм.

Çанталăк тёттёмленсех пырать. Вăхăт 10 сехет. Эпё взвода лачакасем урлă пёр сул тёлне ситертём. Шăп. Хушăран çеç тăшман минометёнчен тёлёсёр перçе кăларнă мина таçта аякра çурăлни илтёнет. Красноармеецсене пёр тёле пухса кёçёрхи засадăна мёнле пурнăçламаллине ăнлантарнă хыççăн боецсем противникшăн паллă мар вырăнсене йышăнчёç. Эпир те политрук Лазаревпа пытанса вырнаçрăмăр. Пирён пурин те пёр шухăш—противника чёрёлле тытса кирлё сведенисем илесси.

Çапла кётсе выртнă хушăра связист Фомин чупса пырса сывăхра сынсен сассине илтни çинчен мана пёлтерет. Связист уйрăлма кăна ёлкёрёччё, ракетăн çути пётём тавралăха çутатрё. Палламан сынсем сывхарса çитсен:

— Стой! Кто идет, ваши пропуска!—тесе постра тăракан Кузьмин кăшкăрнă сасă пётём таврана янратса кайрё.

Унччен те пулмарё, фашист мерзавецё хăйён автоматёнчен пёр чарăмасăр пеме пуçларё. Эпё çавăнтах:

— Взвод, к бою!—тесе команда патăм.

Противник хăйён автоматёнчен пёр пуля юлмичченех перçе пётерчё пулас, вăхăтлăха чарăнчё. Анчах постра тăракан Кузьмина тăшман пульли лекрё. Ку хушăра отделени командирё сержант Семенов:

— Бросать оружие! Руки вверх!—тесе кăшкăрчё. Мерзавецсем пăшалсене хучёç. Каска тăхăннă, аллисене çёкленё палламан çынсем вырăнтан хускалмасăр тăраççё. Вёсем тăваттăн пулни палăрчё, ыттисем пуçёсене çавăнтах хунă.

Тул çутăлнă çёре нимёçсене штаба илсе çитертём. Кунта пире капитан кётсе илчё. Эпё ăна ёçсем мёнле пулни çинчен каласа патăм. Капитан, хăй çинчи протупейне юсакаласа, пёр нимёçне хăй патне чёнсе илчё.

— Где ваше соединение?—тесе ыйтрё. Нимёç ответлемерё. Эпё нимёç чёлхине пёлкеленипе капитан ыйтуне нимёçле куçарса патăм. Вăл аллине Хёвеланăç енне тăсса кăтартрё. Вăл хăй Ганс ятлине те каларё. Çапла, çак Ганс пире кирлё сведенисем пёлтерчё. Вăл: «вырăс çарне хирёç вăрçма эпир пёри те килёшместпёр, анчах пире офицерсем хăваласçё», тет. Иккёмёш салтакран та çавăн пек ответах илтёмёр.

Хёвел В. çăрчё хыçёнчен тухса пирён çине ăшă пайăркисене сапрё. Капитан пире хăй патне чёнсе илсе приказпа паллаштарчё.

— Юлташ лейтенант, сире малалла та пысăк çитёнӳсем тума телей сунатăп,—тесе пирёнтен уйăрлчё.

Тепёр сехетрен эпир наступление кайрăмăр.

Лейтенант С. ЕГОРОВ.
Действующи арми.

Тăван çёршыв оборонин фондне

ÇЁРПУ. Районри ёççыннисем оборона фондне 77 пин тенкё укçан тата 120.085 тенкёлёх заем облигацийёсем хывнă.

Оборона фондне хывасси ӳссех пырать.

Г. П.

* * *

Йăкăрвар ялсоветёнчи (Çёрпӳ р.) «Шурăмпуç» колхоз тата колхоз членёсем çёршыв оборонин фондне 50 центнер тырă панă. Колхозри комсомолецсем 1300 тенкёлёх заем облигацийёсем пухса оборона фондне хывнă.

Çавăн пекех, «Оборона» колхозра та оборона фондне пёр тонна тырă, 500 штука çăмарта панă.

А. СТЕПАНОВ.

* * *

Советскинчи вăтам шкулти учительсемпе вёренекенсем Хёрлё Çар боецёсем патне 150 тенкё укçа пухса тёрлё япаласем туянса парнесем ярса панă.

Е. ЧУГУНОВА.



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Зенитнăй батарейăн наблюдательнăй пунктёнче.
А. ЗВЕРЕВ фотоӳкерчёкё. (ТАСС фотохроники).

Колхозсенче ĕç вăйĕпе туллин усă курмалла

Колхоз хуçалăхĕн пур участокĕсенче, те халь ĕç тухăçлăхĕ вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа ӳссе пымалла. Колхозсенче административнăй аппарата май килнĕ таранах пĕчĕклетсе пымалла. Пĕр вăхăтра ку тĕлĕшпе хăшпĕр мероприятисене туса ирттернĕ. Çакăн хыççăн тӳрремӗнех колхоз производствинче ĕçлеме 6—7 пин çынна яхăн бригадăсемпе звеносене пычĕç. Çакă вăл ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухма тата унпа лайăх усă курма май пачĕ. Анчах ку енĕпе халь пурне те туса ситереймен-ха, хăшпĕр колхозсенче халичченех управленин аппарачĕсем пысăк. Пĕлмач ялсоветĕнчи «1-ое Мая» колхоз (Канаш р.) правленин штатĕнче, председательпе счетоводсăр пуçне, председатель заместителĕ, икĕ учетчик, завхоз, кладовщик тата техничка тытса тăраççĕ. Çаксенчен пĕри те кăçал уй-хир ĕçне хутшăнман. Апла пулин те, вĕсем хăйсем туса пымалли ĕçсене тивĕçлипе йĕркелесе пырайман.

Халăхи вăхăт колхозсенчи пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пыма ыйтать. Ку тĕлĕшпе нумай колхозсенче правленин аппарачĕ туса пымалли ĕçсене колхозниксем хăйсемех тăваççĕ. Иртнĕ çулсенче колхоз председателĕсем, счетоводсем тата кладовщиксемпе завхозсем уй ĕçне тума тухман пулсан, кăçал вĕсенчен чылайăшĕ уборка вăхăтĕнче активлăн хутшăнса ĕçлерĕç. Хăшпĕр колхозниксем ик-виçĕ сыннăн та ĕçлеме тытăнчĕç. Кунерти Киров ячĕпе тăракан колхозри (Куславкка р.) ферма заведующийĕ А. Кондратьева юлташ 14 ĕне, 12 пăру пăхса усрать, çав вăхăтрах тата доярка пулса ĕçлет. Çакăн пек тĕслĕхсене темĕн чухлех илсе кăтартма пулать.

Колхозсенче темиçе çын тумалли ĕçе пĕр çынах тума ĕлкĕрсе пыни вăл—ĕç вăйне кирлĕ таранах пушатма пулăшать.

Колхоз хуçалăхĕ—пысăк, пур енĕпе те аталанса пыракан хуçалăх. Кашни участока тĕрĕслесе тăни кирлĕ. Анчах çакă вăл кашни участокра ятарласа уйăрса лартнă çын ĕçлемеллине пĕлтермест, вăл ĕçсене опытлă колхозниксем хăйсемех туса пыма тивĕç. Çапла туни ĕнтĕ колхозсенчи ĕç вăйне усăсăр сапаласа пĕтересрен сыхлать. Пĕр çын темиçе обязанноçа туса пынă вăхăтра та штатра ĕçлекен работниксене ялхуçалăх ĕçĕсене анлăн хутшăнтарса пырас пулать. Усăсăр пĕр сехет те сая каймалла мар.

Вăрмар районĕнчи «Тугас» колхоз председателĕ Ванюков юлташ хăй çеç мар колхозниксемпе пĕрле хирте ĕçлет, çав вăхăтрах вăл аппаратра ĕçлекен ытти работниксене те активлăн хутшăнса ĕçлеме ыйтать. Тури-Сурăмри (Шăхасан р.) «Заря» колхозри бригадирсем вăрçă пуçланнă кунранпах хăйсен бригадисенче колхозниксемпе танах ĕçлеме пуçланă.

Колхозсенче темиçе профессипе ĕçлессине сарса пырсан, ĕç вăйĕн резерви яланах çителĕклĕ пулать.

А. ГРИГОРЬЕВ.

Çамрăк стахановец-двухсотниксем

Вĕсен ĕçĕсем çинчен пире цех начальникĕ Ситулин юлташ каласа панă. Вĕсем производствăна иртнĕ çулсенче хăна пырса кĕнĕ. Унччен машинех вăтам икулсенче вĕреннĕ.

Слесарь Коля Сергунин цеха кăçалхи июнь уйăхĕнче пырса кĕнĕ. Çак кĕске вăхăт хушшинчех слесарь специальноçне вĕренсе çитнĕ. Тĕлĕнмелле унăн ĕçĕнчен. Пачă заказа яланах васкавлăн пурнăçлама тытăнать, кĕске вăхăт хушшинче туса пĕтерет. Август планне вăл 149 процент, сентябрь планне икĕ хут ытла—237 процент тултарнă.

— Вăл пирĕн цехра чи çамрăк рабочи шутланать. Ĕçре хăваласа çитме çук вара ăна.—Çапла калаççĕ хастаррăн слесарь çинчен цехри ватă рабочисем.

Коля Сергунинпа юнашар унăн пичĕшĕ Петя ĕçлет. Вăл производствăна ĕçлеме шăлнĕнчен кăштах маларах килсе кĕнĕ. Ăна малтан ученика илнĕ, тăвата уйăх каялла вара слесарь куçарнă. Халь вăл вăтамран илсен хăйĕн ĕç нормине икшер хут ирттерсе тултарать. Сентябрь уйăхĕнчи нормăна вăл 220 процент тултарса 410 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Ĕç тухăçлăхне хăпартса пырас, лайăх пахалăхлă продукци туса парас тĕлĕшпе Арсентий Тарлыковпа Боря Тараканов слесарьсем те лайăх результатсем кăтартаççĕ. Вĕсем нормăна куллен ирттерсе тултараççĕ. Уйрăмах вĕсем отечественнăй вăрçă кунĕсенче паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Тарлыков юлташ, васкавлă заказсем тумалла пулсан, цехран тухмасăр ĕçлет.

— Вăл вăхăта пăхмасть. Унтăн пулсан норма та ним те мар. Чылай чухне смена хушшинче тумалли ĕçе 4—5 сехет хушшинче туса пĕтерет,—терĕ Ситулин юлташ, Тарлыков юлташăн ĕçне хакласа.

Нумаях та пулмасть, вăл пĕр васкавлă заказа кăтартнă срокран виçĕ хут малтан пурнăçларĕ. Çапла ĕçленĕрен ĕнтĕ Тарлыков юлташ сентябрь уйăхĕнче нормăна 243 процент тултарса 680 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Коля Липатов комсомолец 17 сула çеç кайнă-ха. Час-часах ăна цехри рабочисем «пионер» тесе чĕнеççĕ, канма сĕнеççĕ. Ун пек каласан вăл тата ытларах хастарлăхпа ĕçлеме пуçлать. Ларса каннине курайман ăна., Яланах вăл ура çинче ĕçлесе тăрать.

Август уйăхĕнче Липатов юлташ, вăтамран илсен, нормăна 167 процент тултарса ĕçленĕ. Иртнĕ уйăхра татах палăрăнтĕ тунă—плана 241 процент тултарнă.

Çакăн пек ĕçлеççĕ древкомбинатри çамрăк специалистсем хăйсене шанса панă ответлă участоксенче. Вĕсем чăнчăнах хастарлă патриотсем, малта пыракан стахановецсем. Тăрăшни, ĕçе юратни вĕсене çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума хавхалантарать. Вĕсем ĕç кунĕне туллин усă курасçĕ, ĕç вырăнне тĕрĕс организацилеççĕ. Кирлĕ чухне цехран тухмасăр ĕçлеме те яланах хатĕр.

Хар. ЛИСИН.

Пурçăн хурчĕсенчен илнĕ тупăш

Çĕрпӳ районĕнчи «Пожанар» колхоз кăçалхинче иккĕмĕш çул пурçăн хурчĕсем ĕрчетет. Çак хуртсенчен иртнĕ çулхине те нумай тупăш илнĕ. Кăçал та вĕсем 414 килограмм кокон илсе колхоза 8.282 тенкĕ тупăш панă.

Г. ПЕТРОВ.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçре

Чăваш республикинчи ĕçсыннисем, Совет Союзăнчи нумай миллионлă халăхсемпе пĕрле, государство умĕнчи обязательствăсене, ялхуçалăх налогĕпе ытти тӳлевсене срочченех парса татаççĕ. Пирĕн тăван çĕршыв çине вăрçăпа хилсе кĕнĕ тăшмана çĕмĕрсе тăкма кашни гражданин мĕн вăй çитнĕ таран пулăшать.

Анчах хăшпĕр ялсоветсен председателĕсемпе финанс работникĕсем çĕршыв умĕнчи пĕтĕм ответлăха туйса илеймен пулмалла. Çахна пула та ĕнтĕ, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татассишĕн кĕрешекен ялсовечĕсемпе пĕрлех, ку ĕçре кая юлса пыракансем те пур-ха. Çĕрпӳ районĕнчи Çĕньял ялсоветĕ виççĕмĕш кварталти финанс планне 148 процент, Рындино—103 процент, Янзакасси—71 процент тултарнă. Çав вăхăтрах Икĕмĕш Вăрманкас ялсоветĕ плана мĕнпурĕ те 29 процент, Чурачăкă ялсоветĕ 31 процент çеç тултарнă.

Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра ялсовечĕсенче налог агенчĕсем пулса хĕрарăмсем йышлăн ĕçлеме тытăнчĕç. Çĕрпӳ районĕнче Хĕрлĕ Çара кайнă налог агенчĕсем вырăнне хĕрарăмсем ĕçлеççĕ, вĕсем хăйсен ĕçĕсене тивĕçлипех туса пыма пуçларĕç. Халăхи вăхăтра çав хĕрарăмсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса 4-мĕш кварталти финанс планне уяв тĕлне тултарма пулчĕç. Çĕрпӳ районĕнчи Янзакасси ялсоветĕнчи налог агенчĕ Михайлова юлташпа Первомайски ялсоветĕнчи налог агенчĕ М. Васильева юлташпа ăмăртса ĕçлет. Михайлова юлташ массăллă-ăнлантаруллă ĕçе анлăн сарса пырса, укçа-тенкĕ пухассине чылаях лайăхлатрĕ. Вăл укçасене канцеляринче илсе ларнипех лăпланмасть. Налог парса татман çынсем патне киле кайса çӳрет, вĕсемпе калаçать, налог законĕсем çинчен ăнлантарса парать. Çапла вăл государствăна памалли обязательствăсене вăхăтра тултарса пыма пулăшать. Иккĕрвар ялсовечĕн председателĕ А. Ивановпа налог агенчĕ П. Иванов тата Çĕньял ялсовечĕн председателĕ Филиппов юлташсем, ăмăртса ĕçлесе, 4-мĕш кварталти ялхуçалăх налогĕн планне октябрĕн 3-мĕш тĕлнех 30—35 процент тултарчĕç.

Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Вăрнар поселокĕн совечĕ те лайăх тĕслĕхсем кăтартса пырать. Налог агенчĕ Спиваковская юлташ тăрăшнипе тата активлă пĕрмаях пулăшса пынипе поселок совечĕ III-мĕш квартал планне 103 процент тултарнă.

Тăвай районĕнчи Чутей ялсовечĕн председателĕ Марфа Кольцова, вăрçăчен рядовой колхозница пулса ĕçленĕскер, укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе малтанхи кунсенчех паха примерсем кăтартса ĕçлесе пыма пуçларĕ. Икĕ кун хушшинче вăл 5 пин тенкĕ укçа пуçтарнă. Гришински ялсовечĕн секретарĕ Сафонова юлташ ку тĕлĕшпе аван ĕçлет. Вăл, ялсоветĕнче ĕçленисĕр пуçне, колхоз правленинче счетовод пулса ĕçлет.

Ялсоветсемпе колхозсенчи работниксем хушшинче икшер çыннăн ĕçлекенсем татах та пур. Анчах çамрăк кадрсене куллен пулăшса пыни кирлĕ.

М. ПРОХОРОВ.

Колхозри çамрăк патриоткăсем

КУСЛАВККА. Комсомолăн Киров ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш организацийĕнче 9 комсомолец. Вĕсем пурте колхоз производствинче активлăн ĕçлеççĕ. Комсомолка Е. Тарасова юлташ бригадир пулса ĕçлет, унăн бригади уборкăра мала тухрĕ. Комсомол организацин секретарĕ А. Кондратьева юлташ ферма заведующийĕ, çав вăхăтрах вăл доярка пулса ĕçлет. Кондратьева юлташ хăй пĕччен 14 пуç ĕне, 12 пуç пăру пăхать. Колхозăн кăçал государствăна 7.600 литр сĕт памалла пулнă пулсан, вăл 8.400 литр парса планна ытлашшипех тултарнă. Кунсăр пуçне 200 литр оборона фондне панă.

Комсомолецсем агитациллĕ-массăллă ĕçе те лайăх туса пыраççĕ. Колхоз правленийĕ комсомолец-агитаторсем валли «Известия», «Чăваш Коммуни», «Красная Чувашия» тата районри «Ленин ялавĕпе» хаçатсене çырăнса илсе парать. Кашни бригадăрах стена хаçачĕ кăларса тăраççĕ. Агитаторсем агитациппе массăллă ĕçсене лайăх туса пынă май, ялхуçалăх ĕçĕсем ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Государствăна тырпул парса татнă. Колхозра халь пахчаçимĕссем типĕтме пуçланă. Ку ĕçре Е. Тарасовăпа А. Федорова комсомолкăсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

П. ЛЕНАР.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Ленинградри заводсенчен пĕринче ĕçлекен стахановецсем А. М. Богданова тата комсомолец Л. Г. Темкин ручной гранатăсене пуçтараççĕ.

А. МИХАЙЛОВ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Халăх юрри-сăввисем

Пире вилĕм тивес çук

Пире анне çуратнă
Çутă хĕвел çуттинче,—
Çутă хĕвел сӳнмесĕр
Пире вилĕм тивес çук.
Çутă хĕвел сӳнес çук—
Пире вилĕм тивес çук.

Пире анне çуратнă
Сенкер тинĕс хĕрринче,—
Сенкер тинĕс типмесĕр
Пире вилĕм тивес çук.
Сенкер тинĕс типес çук—
Пире вилĕм тивес çук.

Пире анне çуратнă
Аслă халăх çемьинче,—
Аслă халăх пĕтмесĕр
Пире вилĕм тивес çук.
Аслă халăх пĕтес çук—
Пире вилĕм тивес çук.

Вилĕмрен вăйли пурнăç пур

Тăшман вăйлă теейсе,
Тăшман вăйлă теейсе,
Пуçа усса тăрас мар,
Мамас ухса ларас мар.
Кулянса çеç çӳреме
Куян çури мар эпир.
Пуçа усса çӳреме
Пуса тăрри мар эпир.
Кашкăр вăйлă, кашкăр вăйлă—
Унтан вăйли этем пур;
Суя вăйлă, Суя вăйлă—
Унтан вăйли Чăнлăх пур;
Вилĕм вăйлă, Вилĕм вăйлă—
Унтан вăйли Пурнăç пур.

Колхоз хĕрĕ

Колхоз хĕрĕ пике пек,
Икĕ пичĕ чие пек.
Пĕр каппайчăк фашисчĕ,
Пĕр мухтанчăк фашисчĕ
Çавна чура тăвап, тет,
Гитлер кулли тăвап, тет.
Хура çĕрпе тухать çак,
Чикĕ урлă кăсать çак.
Колхоз каччи улăп пек,
Пĕвĕ-çийĕ кĕреш пек.
Хурать пĕрре пуç урлă
Çав каппайчăк фашиста—
Икçĕр çухрăм чик урлă
Сирпĕнет леш ывтăнса.

Хура юнлă çичĕ ют,
Пĕрре мар кил, çичĕ хут.
Çавах колхоз хĕрĕсене
Эсĕ чура тăвас çук.
Пирĕн колхоз каччисене
Эс мар, шуйттан çĕнес çук.

Сăпаçипă шăпчăкне

Сăпаçипă шăпчăкне
Çич чĕпĕ ӳстернĕшĕн,
Çич чĕпĕ ӳстернĕшĕн,
Çич çĕре вĕçтернĕшĕн.

Сăпаçипă амăшне
Çич ывăл сиктернĕшĕн,
Çич ывăл сиктернĕшĕн,
Çич герой ӳстернĕшĕн.

Çичĕ чĕпĕ çич тĕлте,
Çичĕ йывăç сийĕнче;
Çичĕ ывăл çич тĕлте,
Çичĕ вăрçă хирĕнче.

Çичĕ шăпчăк юрринчен
Тĕлĕнеççĕ кайăксем;
Çичĕ герой ĕçĕнчен
Тĕлĕнеççĕ халăхсем.

Халăх юррисем тăрăх
Гр. **Краснов** çырнă.

ХАЛĂХА ПĔЛСЕ ТĂМА

Сывлăшри десантсем тата вĕсемпе кĕрешесси çинчен

Сывлăшри десантсен теорине чи малтан пирĕн Хĕрлĕ Çар шухăшласа кăларса практикăра пурнăçласа кăтартнă. Кайран вара вăл теорипе практика капитализмлă çĕршывсен çарĕсенче те, вăл шутрах фашистсен арĕнче те, анлăн сарăлса кайрĕ. Хăйĕн малтанхи маневреннăй операцийĕсенче Германи сывлăшри десантсемпе пуринчен ытла Норвеги аэродромĕсене туртса илес ĕçре усă курчĕ, малалла вара—Бельгире, Голландире, Францире тата Крит утравĕ çинче—фашистсем çав сывлăшри десантсемпе анлăнах усă курчĕç.

СССР Союзне хирĕç пыракан вăрçăра фашистсем пирĕн çĕр çине сывлăшри десантсем антарса лартни чылай пулкаларĕ.

Сывлăшри десантсем виçĕ тĕрлĕ пулаççĕ: парашютнăй, посадочнăй тата комбинированнăй.

Парашютнăй десантра халăх та нумаях пулаймасть, вооружени те вăйлах мар, мĕншĕн тесен парашютпа ку таранччен танксемпе йывăр орудисем пăрахаймаççĕ-ха (анчах та Крит утравĕ çине парашютнăй десантсем пăрахнă чух парашютпа пĕчĕк калибрлă тупăсем, горнăй артиллери орудийĕсем, минометсем пăрахни те пулнă).

Фашистсен кашни парашютисчĕ хăйпе пĕрле револьвер, алăпа пемелли 2—3 граната тата кăштах продовольстви запасĕ илет. Ытти хĕçпăшалсене, радиостанцисене тата кирлĕ пек урăх япаласене грузовой парашютпа пăрахаççĕ.

Фашистсем парашютпа шпионсемпе **диверсантсен пĕчĕк ушкăнĕсене те,** те- мисе çĕршер çынлă чылаях пысăк подкрепленисем те пăрахаççĕ.

Парашютнăй десант составне фашистсем ятарласа суйласа илнĕ, хăйсен ĕçне лайăх вĕренсе çитнĕ çынсене илеççĕ. Сывлăшра вĕсене пуринчен ытла виçĕ моторлă «Юнкерс-52» ятлă самолетпа, тăватă моторлă «Юнкерс-90» тата «Фокке-Вульф-200» ятлă самолетсемпе илсе пыраççĕ. Анчах та кирек мĕнле ытти самолетсемпе турттарса пынисем те пулнă. Вăтамран илсен, турттарса çӳрекен пĕр самолет çинчен 25—40 çын пăрахаççĕ.

Парашютнăй десантсене фашистсем тĕрлĕ çуллĕшрен пăрахаççĕ, хăш чухне самолетсем çĕр çумнех анса 100—150 метр çуллĕшĕнчен кăна пăрахнисем те пулнă. Парашючĕсем шуррисем кăна мар, урăх тĕслисем те пулаççĕ. Кашни тĕсĕ тĕрлĕ груза, тĕрлĕ подразделени пĕлтерет.

Посадочнăй десант вăл—самолет çĕр çине анса ларсан тин самолет ăшĕнчен тухакан десант. Посадочнăй десантсене те çав малта асăннă самолетсемпех турттарса пыраççĕ. Посадочнăй десант парашютнăй десантран чылай вăйлăрах пулать: самолет суначĕсем е тата унăн фюзеляжĕсем айне сыхса полевой орудисем, бронемашинăсем, çăмăл танксем т. ыт. илсе пыраççĕ. Посадочнăй десант антарасся чылай йывăр ĕç, мĕншĕн тесен самолетсем ларма хатĕр аэродром пулмалла. Кам хатĕрлет-ха вĕсем валли аэродром? Нимĕçсем ку ĕçе ик меслетпе майлаштараççĕ. Пĕрремĕш меслечĕ: противник тылĕнче вĕсем малтанах диверсантсем хатĕрлеççĕ, çав диверсантсем аллине пĕр-пĕр аэродром лет, посадочнăй десант çавăнта анса ларать те. Фашистсем Голландире çавăн пек хăтланчĕç. Иккĕмĕш меслечĕ: малтан фашистсем парашютнăй десант пăрахаççĕ, ку десант вара хăвăртрах аэродром хатĕрлет. Аэродром хатĕр пулсанах десант анса ларать. Кун пек майпа антарнă десанта **комбинированнăй десант** теççĕ. Халĕ пуринчен ытла çакăн пек десантсем тĕл пулаççĕ.

Десант антарса лартма кăшт тайлăкрах, шăтăк-путăксăр тикĕс тӳрем хир, пĕр еннелле 300 метр, тепĕр еннелле 200 метр пулсан, лайăх аэродром пулса тăрать, кашни енчен 200—250 метр таран пырса кĕмелли лайăх вырăнсем кăна пулччăр. Сарлака та тӳрĕ шоссесем те самолетсем анса лармалли лайăх аэродромсем шутĕнчех тăраççĕ. Гидроплансем юханшывсемпе кӳлĕсем çине анса лараççĕ. Роттердамра (Голландия) фашистсен гидропланĕ хула варринех, Маас шывĕ çине, анса ларнă факт та пулнă.

Сывлăшри десантсен задачисем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Сывлăшри десантсем пирĕн тыла шпионсемпе диверсантсем килсе яма пултараççĕ. Ун пек чух парашютнăй десант фашистла бандитсен пĕчĕк ушкăнне пăрахать. Пăрахасса ăçта кирлĕ унта пăрахма пултараççĕ: фронт çывăхĕнче кăна мар, фронтран пирĕн территори çине тыла темиçе çĕр километр вĕçсе килсе те пăрахма пултараççĕ. Нимĕç сарăсен парашютнăй десантчĕсем пăрахнă парашютистсем хăйсен бомбардировщикĕсене çĕр çинчен сигналсем парса бомба пăрахмалли тĕлсене кăтартса тăма пултараççĕ.

Фашистсем чылаях пысăк сывлăшри десантсене пуринчен ытларах фронт çывăхĕнче антарса хăвараççĕ. Кун пек чух Германи командованийĕ десантсене пуринчен ытла çакăн пек задани парса ярать: çулйĕрсемпе сыхăну-линийĕсене аркатма, тылра паника тума, тылри йĕркеллĕ ĕçе пăсма, пирĕн çар чаçĕсене вырăнтан вырăна куçарас ĕçе чăрмантарма, т. ыт. те.

Куисăр пуçне тата фашистсем пысăк десантсем антарса фронтра пыракан наступленнисем вăхăтĕнче пирĕн çар чаçĕсене тылран татса илсе хупăрласа илме хăтланаççĕ. Хĕрлĕ Çар çирĕп тăнипе ун пек десантсен ирĕр ĕçĕсем усал тăшманшăн нихăçан та ăнăçуллă пулман. Пирĕн чаçсене тылран татса çавăрса илес тенкенсене вĕсене Хĕрлĕ Çар чаçĕсем яланах хăйсене хупăрласа илсе тĕппипе пĕтерсе пынă.

Сывлăшри десантпа пăрахакан диверсантсем тумтирĕ тĕрлĕрен пулать. Ку вăл десанта мĕн тума хушса янипе килет. Сывлăшри десантпа анакан çар чаçĕсем яланах официальнăй йĕркепе йышăннă военнăй форма тăхăнаççĕ, тесе фашистла бандитсен обер-палачĕсем тĕнчене пĕрре çеç мар пĕлтерчĕç. Анчах ку вăл пĕртте чăн мар, йĕрĕнчĕклĕ суя сăмах кăна. Фашистсен командованийĕ сывлăшри десант бандичĕсене пирĕн милиционерсен е красноармеецсен формине тумлантарса ярать, хăш чух тата пирĕн çĕршыври ахаль граждансен тумтирĕ пек тумтирпе тумлантарса яраççĕ. Голландире нимĕçсен пĕр десантĕнчи бандитсем попсем пек тумланнă пулнă. Крит утравĕ çине сывлăшри десантпа пăрахнă нимĕç палачĕсем Çĕнĕ Зеланди стрелокĕсен (Англи çарĕ) формине тăхăннă пулнă.

Çапла ĕнтĕ сывлăшри десантсене тăста та антарса лартма пулать. Çавăнпа та сывлăшри десантсене пĕтерес ĕçе çар чаçĕсен вăйĕсемпе кăна туса пыма май çук. **Сывлăшри десантпа аннă фашистла бандитсене пĕтерес ĕçе пĕтĕм халăх хутшăнмалла.** Çакна шута илсе, пирĕн халăх сывлăшри десантсене пĕтермелли майсене пурне те лайăх пĕлсе тăмалла, сывлăшри десантсене пĕтерес ĕçе активлăн хутшăнма яланах хатĕр пулмалла.

Сывлăшри десанта е сывлăшрах авиаци вăйĕпе пĕтерме пулать, е çĕр çинче—авиаци, Хĕрлĕ Çар чаçĕсен. НКВД-н истребительнăй батальонĕсен тата вырăнти халăхăн пĕрлешӳллĕ вăйĕсемпе пĕтермелле.

Сывлăшри десанта пĕтерес ĕçе хутшăнса вырăнти халăх мĕн тума пултарать-ха?

Чăн малтан, тăшман самолечĕсем килнине çийĕнчех асăрхама тăрăшас пулать. Час курнă самолетсене пĕтерме те часах пулать.

Сăвăнпа та пĕтĕм çĕршыв тăрăх пур çĕрте те **асăрхаса тăмалли вырăнсем (наблюдательнăй постсем)** пулмалла. Çав наблюдательнăй постсене кашни колхозра, совхозра, кашни предприятире организацилемелле. Наблюдательнăй постсенче тăма хушнă çынсен пурин те нимĕç самолечĕсене хамăр самолетсенчен уйăрса илме лайăх пĕлмелле, çавăнпа та вĕсен нимĕç самолечĕсене тулти тĕсĕнченех часах палласа илме пĕлес пулать. Наблюдательнăй постсене телефон е телеграф сывăхне тумалла. Фашистла бандитсен самолетне курсанах наблюдательнăй постра тăракансем хăвăртрах телефонпа-и, телеграф тăрăх-и, е урăх майпа НВКД-н истребительнăй батальонне, сывăхри çар чаçне тата совет власăн органĕсене пĕлтереççĕ.

Наблюдательнăй пост хăйĕн пĕлтерĕвĕнче (донесенинче) акă мĕн çинчен обязательно каламалла: тăшман самолечĕсене хăш вăхăтра, хăш вырăнта курнă, вĕсем хăш еннелле (кăнтăра-и, çурçĕре-и) вĕçсе пынă, мĕн çуллĕшĕнче, миçе самолет, вĕсен типĕ. Наблюдательнăй пост донесенийĕ пирĕн авиацине тăшман самолечĕсене çĕмĕрсе тăкма пулăшĕ, наблюдательнăй пост пĕлтернипе çĕр çинчи отрядсем те вăхăтра хатĕрленсе тăрĕç, тăшмана тĕппипе çĕмĕрсе тăкĕç.

Наблюдательнăй постсен ĕçне лайăх организацилени, вĕсем вăхăтра пĕлтерсе тăма пултарни тата çак енчен пит паха: **сывлăшăри десанта пĕтерме пуринчен ытла сывлăшра—вăл анса париччен е анса ларнă чухне—çăмăл,** мĕншĕн тесен ун чухне десант хăйпе пĕрле илсе пыракан хĕпăшалпа усă курма пултараймасть тата противника хирĕç тăма та йĕркеленсе çитмен-ха вăл ун чух. Анчах вăл вăхăт—пит кĕске самант. Десанта 100—150 метр çуллĕшрен пăрахаççĕ пулсан, парашютиста çĕр çине сиксе анма мĕн пурĕ те 15—20 секунда кăна кирлĕ, пĕрĕм подразделение сиксе анса пĕрле пухăнма, хĕпăшалсене тата ямалăх пуçтарса çитерме мĕн пурĕ те 10—15 минута çеç кирлĕ. Çак вăхăтпа ĕнтĕ пĕтĕмĕшпех туллин усă курса юлма тăрăшмалла. Десанта сывласа илме те памалла мар, мĕншĕн тесен анса вырнаçма вăхăт парсан, десанта пĕтерме малтанхинчен чылай йывăртрах пулать.

Тăшман самолечĕсене ларма кансĕрлес тесен, вĕсем анса ларма пултаракан участоксене малтанах шута илсе хурас пулать, ларма авантарах вырăнсене малтанах самолетсем ларма юрăхсăр тăвас пулать: шăтăксем алтса тултармалла, урлă-пирлĕ йывăçсем купаласа пăрахмалла, юпасем алтса лартмалла, ăçта кирлĕ унта урапасем тăратса тухмалла, т. ыт. те. Десант анса ларасси çинчен пĕлтерекен сведенисене вăхăтра илсен, самолетсем анса ларма пултаракан кирек мĕнле вырăнти участока та ал ăйĕнчи материалпа кĕске вăхăтрах тăшман самолечĕсем усă курма пултарайми тума пулать.

Ирсĕр тăшман парашютнăй десант пăрахма хăтлансан, десанта çав самантрах пĕтерсе тăкма пĕтĕм вăл хурас пулать, ал ăйĕнчи средствăсене пурне те хута ярас пулать. Çапах та

(Юлашки 4-мĕш страницăра).

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. (Хĕвеланăç енĕ). **Укерчĕн çинче** (сылтăмра) —фашистсен суйласа илнĕ чи лайăх летчикĕсем — «ассем» обер-фельдфебель Франц Кнейбель, штабс-фельдфебель Отто Шааф, унтер-офицер Алуис Кильян тата фельдфебель Руперт Гайнингер. Сывлăшри çак бандитсем Бельгири, Норвегири тата Францири çуртсене çунтара-çунтара янă тата мирлĕ халăха вĕлернĕ, Лондон çине пиратла пырса тапăннă çĕре хутшăннă. Германи командованийĕ сентябрь уйăхĕнче вĕсене Хĕвелтухăç фронтне янă. Сентябрĕн 21-мĕшĕнче çак экипаж кунта малтанхи хут тата... юлашки хут вĕçнĕ. Совет зенитчикĕсем персе çĕмĕрнĕ «Хейнкель-111» самолет (сулахайри ӳкерчĕк) Белорусово ялĕ патне анса ларнă, пырса çитме ĕлкĕрнĕ боецсемпе командирсем экипажне тытăна илнĕ.

М. РЕДКИН фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Оккупациленĕ çĕршывсенчи гитлерла террор

СТАМБУЛ, октябрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Халĕ çеç илнĕ сведенисем тăрăх, Чехири мĕнпур хулисемпе ялсенче Германи влаçĕсем питех те нумай çынсене арестленĕ. Германи салтакĕ çинычех çынни кăмăлсăр куçпа пăхниех ăна Германи трибуналĕ асаплантармалли çителĕклĕ сăлтав пулса тăрать.

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Швецири печат çапла пĕлтерет: Норвегири аслă вĕренӳ заведенийĕсенче профессорсемпе преподавательсен составне тасатас ĕç пырать. Çак кунсенче влаçсем циркуляр салатнă, унта студентсем Германие хирĕçле демонстрацисем туса ирттернĕшĕн ректорсемпе старший преподавательсем ответ тытма тивĕçлĕ, тесе кăтартса панă. Çавăн пек демонстрацисем пулас пулсан, вĕренӳ заведенийĕсене хупаççĕ. Юлашки вăхăтра çак сăлтавпа 100 шкула яхăн хупнă.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Голландири Анета агентствин Лондонри корреспонденчĕ çак кунсенче Голландирен Англие тарса пынă виçĕ голландецпа калаçни çинчен пĕлтерет. Вĕсен сăмахĕсем тăрăх, пĕтĕм Голландди халăхĕ, политика çине мĕнле пăхнине тата мĕнле тĕн тытнине пăхмасăрах, Германи оккупанчĕсене кураймасăр тарăхнипе пĕтĕссе тăрать. Нумайĕш голландецсене патриотла выступленисемшĕн арестленĕ, теприсем ахалех «сухалнă». Çав беженецсемех Германи фашисчĕсем тунă концентрацилĕ лагерьсенче кунсеренех питĕ нумай голландецсем вилни çинчен пĕлтернĕ. Таванĕсене хăйсен сывăх çынни-сем вилни çинчен нумай чухне нимĕн те пĕлтермеççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бельги правительствин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Спаак ничет представителĕсемпе калаçнă чухне юлашки вăхăтра Бельгире Германие хирĕçле саботаж массăллă явлени пулса тăни çинчен пĕлтернĕ. Нимĕçсем, тенĕ вăл, хальхи вăхăтра бельгиецсене тĕнчери иртнĕ вăрçăринчен те ытларах тĕрмене хупаççĕ.

Германи влаçĕсем Бельги промышленноçне контроль туса тăрассине хăйсен аллине илнĕ. Предприятисенче Германи администрацине лартса тухаççĕ, мĕншĕн тесен бельгиецсем оккупацийлĕ влаçсемпе пĕрле ĕçлеме килĕшмеççĕ.

Хĕллене хатĕрленсе çитнине тĕрĕслетпĕр

ЕЛЧĔК. Выльăхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслес тĕлĕшпе ирттернĕ икĕрнелĕхе районри комсомол организацийĕсем пурте хутшăнчĕç. Çав вăхăтра «Красный часовой» колхозри комсомолецсем (организацин секретарĕ Федоров юлташ) комбайн вырса пăрахнă уйри улăмсене йăлтах пуçтарса кĕчĕç. Комсомолецсен вăйăпе ĕне витине тирпейлерĕç, унти шăтăк-çурăксене питĕрсе тухрĕç.

«Марс» колхозри комсомолецсем те (секретарĕ Сабирьянов юлташ) ĕне тата лаша витине тирпейлерĕç. Ку тĕлĕшпе колхозра çамрăксен ятарласа организациленĕ бригади ĕçлерĕ. Ĕçре вĕсене ферма заведующийĕ, ВЛКСМ райком пленумĕн членĕ Гимракова юлташ ертсе пычĕ.

Уйра яшăхса выртакан улăмсене пуха кĕртес, выльăх витисене тирпейлес тĕлĕшпе Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем те (организаци секретарĕ Краснова юлташ) тăрăшса ĕçлерĕç. Икĕрнелĕх вăхăтĕнче выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе Аслă-Таябари вăтам шкул директорĕ, комсомол организацин секретарĕ Воронков юлташ нумай пулăшрĕ.

«КИМ» колхозри комсомолецсен ĕçĕсем çинчен «Комсомольская правда» хаçатра вуласа пĕлнĕ хыççăн комсомолецсем патне Хĕрлĕ Çар боецĕсен группинчен çыру килчĕ. Боецсем комсомолецсене выльăхсене ăшă витесенче хĕл каçарма, вĕсем валли апат çителĕклĕ хатĕрлеме сĕннĕ. Çавăн хыççăн «КИМ» колхозри комсомолецсем икĕрнелĕхе организованно хутшăнчĕç. Выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе комсомолецсенчен ятарласа бригада организацилерĕç.

А. КРАСНОВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

• • •

КАНАШ. Октябрĕн 3-мĕшпе 17-мĕш хушшинче районри чылай колхозсенче выльăх апачĕ хатĕрлес, витесене юсас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. 24 колхоз выльăх апачĕ хатĕрлес плана ирттерсе тултарнă. Çак икĕрнелĕхре Вăтакас Татмăшри Чкалов ячĕпе тăракан колхозра 75 тонна, Кармаминчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозра 45 тонна, Вăрмпуçĕнчи «Коминтерн» колхозра 110 тонна силос хывнă. Аччари «Хĕрлĕ Çар», Семеновкăри «Хĕрлĕ ялав», Хирти Шетмĕри «Красная Чувашия», Сухайкассинчи Молотов ячĕпе тăракан колхозсенчи çамрăксем выльăх витисене юсас ĕçсене активлăн хутшăнчĕç. Уйрăмăнах Çĕнĕ Шелттемри «Хĕрлĕ çăлтăр» колхозри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем (ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ Филиппов юлташ) лайăх ĕçлерĕç.

П. НИКОЛАЕВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Ёçе юратакан председатель

Ĕçчен çын нихăçан та ахаль ларманскер, мĕн те пулин усăллă ĕç тума тăрăшать. Пирĕн «Красный клевер» колхоз (Комсомольски р.) председателĕ Филимон Смирнов юлташ та ĕçе чĕререн юратакан çын пулчĕ. Колхозра вăл тума пĕлмен ĕç çук. Вăл—плотник, тимĕрçе, машиновед, слесарь т. ыт. те. Кăнтăрла вăл правлени канцелярийĕнче питĕ сайра пулать, ытларах производствăра ĕçлеме тăрăшать. Ялхуçалăх машинисене хăех юсаса хатĕрлет, общественнăллă çурт-йĕрсем лартнă чухне плотникре ĕçлет. Тырпула пухса кĕртнĕ чухне те машиноведа ĕçлерĕ. Колхозниксем ĕçрен тавăрăннă хыççăн çеç Смирнов юлташ правлени канцелярийне ĕçлеме пырса ларать. Вăл правлени аппаратĕнче ĕçлекен работниксене те ĕçе хутшăнтарса пырать.

Колхоз государствăна тырă, аш-какай, çĕрулми, сĕт-çу, çамарта пĕтĕмпех парса татнă. Оборона фондне 18 центнер тырă, пĕр сысна панă.

В. ВИКТОРОВ.

Лайăх ĕçлекен тракторист

И. Федотов юлташ Çĕмĕрле машинно-тракторнăй станцине ĕçлеме пыриччен малтан виçĕ çул хушши мехлесопункта тракторист пулса ĕçленĕ. Ун чухне те вăл ĕç нормине 180—200 процент таран тултарса пынă. Машинно-тракторнăй станцине ĕçлеме куçнă хыççăн та Федотов юлташ кăтартуллăн ĕçлет. Çураки тунă тата тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра та нормăна ытлашшипех тултарчĕ. Халĕ вăл кĕркки çĕртме тăвать. Октябрĕн 8-мĕш тĕлне вăл 135 гектар суха тунă. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Федотов юлташ хăй çине тепĕр 100 гектар кĕркки çĕртме тума обязательство илнĕ.

Федотов тракторист ялхуçалăх çулĕ пуçланнăранпа 500 килограмм ытла горючи перекетлесе хăварнă.

Çамрăксен пухăвĕсем

ЕТĔРНЕ. Районри комсомол организацийĕсенче Мускаври çамрăксен фашизма хирĕçле митингĕн чĕнĕвне сӳтсе-явас пирки çамрăксен пухăвĕсем пулса иртеççĕ.

Митинг чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн, районри çамрăксем тăрăшса ĕçлеме, ĕçе кĕске срокра тума, стахановецсен-двухсотниксен йышне ӳстерме, вăрçă ĕçне вĕренме пулчĕç.

Çамрăксем хăйсем йышăннине ĕçре пурнăçа кĕртеççĕ. Район центрĕнче 30 хĕрача медсестрасен курсĕнче вĕренет. Колхозсем уйри тырпула пухса кĕртес ĕçе вĕçлесе пыраççĕ. «Правда» колхозри комсомолка М. Баймулкина юлташ ертсе пыракан бригада çĕрулмине чи малтан кĕске срокра кăларса пĕтерчĕ.

Халăха ПВХО нормине вĕрентме комсомолецсем хăйсем çине илчĕç. Урапакассинчи пуçламăш шкулта вĕрентекен учитель-комсомолецсем Петров тата Мурвина юлташсем ПВХО кружокĕсене ертсе пыраççĕ. Пур допризывниксем те вăрçă ĕçне вĕренмелли пунктсене çӳреççĕ.

И. ТИМОНИН.

Ачасем завода пулăшаççĕ

Çак йывăр кунсенче ачасем те канăса пĕлмеççĕ. Шкултан таврăнсан уроксене хатĕрленеççĕ те, амăш-аппăшсене килти ĕçре пулăшаççĕ. Ушкăнпа ачасем унтан та пысăкрах ĕçсем тăваççĕ.

Вăтам шкулти пионерсем вĕренӳ çулĕ пуçлансанах хăйсен заводне пулăшма килĕшнĕ. Малтанах вĕсем канмалли кунсенче воскресниксем туса. ирттернĕ; завод килхушшинчи çӳп-çапсене тасатнă, тимĕр-тăмăра пуçтарнă. Унтан ахаль кунсенче те пулăшма пуçланă, группăн-группăн тухса кирпĕч вагончĕсене пушатнă, тĕрлĕрен детальсене йăтса панă. Хальхи вăхăтра вĕренекенсем завода пулăшма черетлĕн сӳреççĕ. Шкул дирекцийĕ ятарласа расписани тунă. Çав расписани тăрăх пĕр кун пĕр группа, тепĕр кун тепĕр группа сӳрет. Çапла вĕсем уйăх çурă хушшинче пин те пилĕкçĕр тенкĕлĕх пулăшнă. Вăл укçана пĕтĕмпех оборона фондне куçарнă.

Уйрăмăнах завода Х-мĕш класри комсомолецсем активлăн пулăшаççĕ. Класс руководителĕ Е. Г. Кулик хăй те вĕсемпе пĕрле ĕçлет. Учком председателĕ Левчук, комсомол организацин секретарĕ Аксенов, пионер вожатăйĕ Довженко ытти-сене пример кăтартса пыраççĕ.

Т. ИВАНОВ.

Канаш, ВРЗ.

БИБЛИОГРАФИ

1812 çулти Отечественнăй вăрçă çинчен

«Отечественная война 1812 года». Вырăсла, Чăвашгиз, 40 стр. Хакĕ 35 пус.

Чăвашгиз пичетлесе кăларнă çак брошюрăна икĕ статья кĕртнĕ: пĕри—«Отечественная война 1812 года» (проф. Н. Коробков), тепри—«Партизаны 1812 года» (Л. Бычков). Икĕ статьинче те 1812 çулта вырăс халăхĕ Наполеон çарĕсене хирĕç мĕнле кĕрешни çинчен каласа панă.

Çак çулхине, июнĕн 24-мĕшĕнче, Россия çине Наполеон вăрçăпа килнĕ. Российăна хирĕç вăл питех те пысăк çар пухнă. Унăн çарĕнче пĕтĕмпе 575 пин çын пулнă. Россия ăна хирĕç, чи нумайран илсен те, 200—220 пин çынлă çар çеç тăратма пултарнă.

Наполеон хăйне парăнтарасси çинчен шухăшламан та. «Тата тепĕр виçĕ çултан... вара эпĕ пĕтĕм тĕнчере пуçпулса тăракан пулатăп», тенĕ вăл.

Наполеонăн пысăк та вăйлă çарĕ вырăс çарне хĕссе килнĕ. Вырăс çарне ертсе пыракансем, хăйсен çарĕн йышне чакарас мар тесе тата унăн вăйне упраса хăварас тесе, паллă вăхăтчен каялла чакма йышăннă. Çапла вара франц.пуссем Российăна малтан-шала кĕрсе пынă. Юлашкинчен вĕсем Мускав патнелле çул тытнă.

Тăшманăн тата хамăрăн вăйсем мĕнле шайланса тăнине лайăх пĕлекон главнокомандующий Кутузов сентябрĕн 8-мĕшĕнче хамăрăн çарсене Мускав патне чакма приказ панă. Сентябрĕн 13-мĕшĕнче военнăй совет ларăвĕнче Кутузов çапла каланă: «Наполеон тăвăллă юхăм пек килет, ăна эпир чарма пултараймастпăр-ха. Мускав губка пек, вăл ăна çăтса ярĕ» (асăннă брошюрăн 14 стр. пăхăр).

Çапла вара 1812 çулти сентябрĕн 14-мĕшĕнче Наполеон, хăйĕн маршалĕсемпе пĕрле, Мускава çитсе кĕнĕ. Наполеон хăйне Мускаври влаçсен депутацийĕ тухса илессе кĕтнĕ. Анчах та хирĕç тухакан-тăвакан пулман. Юлашкинчен, ăна, Мускавра никам та çук, тесе пĕлтернĕ.

«Мускавра никам та çук! Ун пек пулма пултараймасть»,—тесе кăшкăрса янă вăл. Унта чăнахах та никам та пулман.

Мускав, çак чаплă хула, питех те хăрушă пулнă. Мускавра пушарсем пуçланса кайнă. Вут-çулăм тăвăлĕ сарăлсах, вăйлансах пынă. Наполеон Кремльри дворецăн чӳречинчен хула çине пăхса тăнă. «Хăйсемех çунтараççĕ вĕсем. Мĕнтери хаяр кăмăллăх! Мĕн пек халăх!»—тенĕ вăл. (15 стр.).

Çапла, вырăс халăхĕ, тăшмана çĕнтерес тесе, нимĕнрен те хăраса тăман, юлашкинчен вара, «никам çĕнтерейми çар» тесе шутланă çара вырăс халăхĕ çапса аркатнă.

Октябрĕн 19-мĕшĕнче каçхине Наполеон хăйĕн войскисене Мускавран кăларттарнă. Октябрĕн 22-мĕшĕнче казаксем Мускава кĕрсе пăхнă. Мускавра çак вăхăтра никам та пулман: Наполеон вăрттăн тухса тарнă мĕн!

Анчах та Наполеон хăйĕн пăшалне пăрахман,—вăл çаплах çапăçса çӳренĕ-ха. Вăл, хăйĕн выçăхса çитнĕ салтакĕсене тăрантарас тесе, апат-çимĕçлĕ хуласем патнелле туртăннă. Вырăс çарĕ вĕсене унталла яман: мĕнле çулпа çаратса, çунтарса килнĕ—çав çулпах хăваланă вĕсене.

Кун çинчен брошюрăра çакăн пек çырнă: «Вилĕ кĕлеткесемпе витĕннĕ, çунса пĕтнĕ, выçă çулпа, çав «аслă çар» Мускава пынă çулпа, кайма тивнĕ вĕсене. Çынсемпе лашасем, выçăпа касăлнă пирки, ӳке-ӳкĕ вилнĕ. Çар хыççăн нумай йышлă лавсем сĕтĕрĕнсе пынă, лавсем çине хаклă япаласем, ылттăн, кĕмĕл, пир-авăр тиенĕ пулнă, вĕсене салтаксемпе офицерсем хăйсемпе пĕрле турттарса пынă, çак япаласем пурте вăрласа тупнăскерсем пулнă» (21 стр.).

Вырăс çарĕ тăшмана канлĕх паман: вăл ăна хĕссех пынă. Хыçалтан та, аякран та шакканă,—çакăн хыççăн вара «аслă çарăн» пуçлăхĕ Наполеон 1812 çулти декабрĕн 6-мĕшĕнче хăйĕн асапланса çитнĕ салтакĕсене пăрахнă та, аран-аран кĕлеткине çĕклесе тарнă.

Наполеон çарĕнче малтан 575 пин çын пулнă пулсан, кайран пĕтĕмпе те 30 пин çын таран çеç юлнă, «» шутĕнче хисеплеме пулнисем 1000 çын чухлĕ кăна пулнă.

Декабрĕн 12-мĕшĕнче Наполеон патне маршал Бертье çакăн пек донесени çырнă: «Сирĕн величествăна эпĕ çапла пĕлтерме тивĕç: çар пĕтĕмпех саланса, арканса пĕтрĕ, сирĕн гварди те пĕтрĕ: гвардире 400—500 çын çеç стройра. Генералсемпе офицерсем хăйсен пĕтĕм пурлăхне çухатса пĕтерчĕç. Кашнине тенĕ пекех аллине е урине, е хăлхине, е сăмсине тăм илнĕ. Çулсем вилнĕ çынсен кĕлеткисемпе витĕннĕ; хупахсемпе çуртйĕрсенче те вĕсем туллиех. Çар пĕр вăрăм колонна чухлĕ çеç... Вăл ирхине йĕркесĕр тухать те, çывăрмашкăн каçхине ним йĕркесĕр тавăрăнать» (25 стр.).

Çакăн пек пĕтнĕ «никам çĕнтерейми» çарăн похочĕ.

1812 çула пирĕн халăх нимĕн чухлĕ те манман. Урнă Гитлер çакна манса кайнă пулсан, эпир ăна астутарăпăр. Гитлер çарĕ пирĕн пата вилĕм пама килчĕ пулсан, вăл, чăвашсен пĕр халлапĕпе калас-тăк: **кунта пуйма килчĕ пулсан—вилсе кайĕ!**

Вывод пĕрре: «Иртĕнсе кайса тапăнă тăшмана хирĕç пирĕн халăх пирвайхи хут çеç мар çапăçать. Хăй вăхăтĕнче, Россия çине Наполеон поход тунă чухне, пирĕн халăх отечественнăй вăрçă туса ответленĕ, вара Наполеон поражени тӳснĕ, пĕтсе ларнă. Пирĕн çĕршыва хирĕç çĕнĕ поход пуçаракан, мăнкăмăлланса кайнă Гитлерпа та çавăн пекех пулĕ. Хĕрлĕ Çар тата пирĕн пĕтĕм халăх тăван çĕршывăн, чыслăхăн, ирĕклĕхĕн халĕ те çĕнтерӳллĕ отечественнăй вăрçă туса пырĕç» (В. Молотов).

Çак брошюрăри историллĕ фактсене вĕренсе, вĕсем çинчен халăх хушшинче ăнлантарса памалла. Çакă вăл уйрăмăнах халхи вăхăтра, пирĕн çĕршыв çине ирсĕр тăшман тапăннă чухне, пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн пур тĕлĕшпе те çирĕп пулмалла, нимĕн чухлĕ те хăраса ӳкмелле мар, вырăс халăхĕ иртнĕ ĕмĕрсенче тăшмана хирĕç мĕнле çапăçнине лайăх астуса тăмалла та, пурин те пĕтĕм вăл пухса, тăшмана хирĕç нихăçанхинчен те хастар çапăçмалла!

В. ХУДАРСЕМ.

Йăваш чунлă директор

Ĕпреçри культура çурчĕн директорĕ ĕçе вăхăтра çӳрет, анчах хăш чухне çавăн пек пулкалать: занятине юлтаса килсе, ĕçрен пуринчен кайран каять. Ĕç вăхăчĕ пĕр пек иртет: килет те каять. Ĕçе вăхăтра çӳрени директорпăн пысăк ĕç туни шутланать пулмалла. Кун пек шутлани питĕ пысăк йăнăш.

— Вăрçă вăхăтĕнчи обстановкăра культура çурчĕн ĕçĕнче мĕнле улшăнусем турăр? — тесе ыйтсан, вăл нимĕн шухăшласа тăмасăр:

— Кинокартинăсем кăтартатпăр, çуллахи вăхăтра ташăсем ирттернисĕр пуçне урăх нимĕнех те туман, — тет Осипов.

Çакăн пек ответлени вăл районри культура çурчĕн ĕçĕсене халĕ те вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ йĕркепе урăхлатса çĕнетменнине кăтартать. Культура çурчĕн залĕнче мирлĕ вăхăтри лозунгсем çакăнса тăраççĕ, паянхи кун ыйтăвĕсем тăрăх выставкăсемпе витринăсене организацилемен. Çар кружокĕсем çук. Осипов актива хăй тавра пĕтĕртермен, ку ĕçре райкомол та пулăшмасть. Хĕллене вутă хатĕрлемен. Районри çутĕç пайĕ культура çурчĕн ĕçĕсем мĕнле пулса пынине пĕлет пулин те, нимĕнле мера та йышăнмасть.

Культура çурчĕн директорĕ Осипов юлташăн йăваш чунлă пулма тата лăпланса ларма пăрахас пулать. Вăхăта чăсмасăр, пĕтĕм ĕçе совет халăхĕн отечественнăй аслă вăрçăри задачине пăхăнтармалла. Культура çурчĕсен халхи вăхăтра оборонăллă кинокартинăсем, фашизма хирĕçле фильмсем кăтартас ĕçе организацилемелле, çавăн пекех агитаци майĕсемпе те: лозунгсемпе, плакатсемпе, фото-хаçатсемпе, выставкăсемпе, витринăсемпе т. ыт. туллин усă курмалла, лекцисемпе докладсем итлессине те йĕркелемелле.

В. ИГНАТЬЕВ.

Сывлăшри десантсем тата вĕсемпе кĕрешесси çинчен

ЮЛАШКИ

парашютнăй десант анса ларма пултаратех пулсан, ăна йĕркеленме парас пулмасть, самолетсем анса лармалли вырăн тума пăмалла мар, сиксе аннă фашистла бандитсемпе çĕр çумĕнчи самолетсене пурне те çĕмĕрсе тăкма тăрăшас пулать. Çакăнта ĕнтĕ вырăнти халăх, НКВД-н истребительнăй чаçĕсем пырса çитиччен, **хăйĕн пит пысăк активлăхне кăтартмалла, тăшмана хăвăрт хĕсмелле, десанта пĕр утăм та малалла пусма памалла мар, ăна чи пысăк сиен кӳмелле.**

Çапах та сывлăшри десант анса ларнă вырăнтан мĕнле те пулин малалла хускалса кайма пултаратех пулсан, ун хыççăнах асăрхаса пымалла, ăна пĕр минутлăх та куçран сухатмалла мар, пĕр бандит та лытанса юлма ан пултăр. Десант ăçталла пыни çинчен, унăн составĕ çинчен, вăл мĕн туса пыни çинчен совет влаçĕн органĕсене, НКВД-н истребительнăй батальонне, Хĕрлĕ Çар чаçĕсене пĕрмаях пĕлтерсе тăмалла.

Десант анса ларнă района обязательно пит лайăх пăхса тухас пулать, мĕншĕн тесен хăшпĕр чух диверсантсем, ан курăнтăр тесе, хĕçпăмала алтса пытарса хураççĕ.

Парашютистсем анса ларнă чух çав тавралла пулнă çын çынсене пурне те тытса чарас пулать, мĕншĕн тесен вĕсем диверсантсем пулма пултараççĕ, е малтанах юри янă шпионсем, тăшман десантне анса ларма пулăшу параканскерсем пулма пултараççĕ.

Десант анса ларнине пĕлсенех, çийĕнчех мĕнпур кирлĕрех объектсене те сыхласа хӳтлес ĕçе вăйлатас пулать. Çулсемпе кĕперсем, çыхăну линийĕсем, электроподстанцисем, электростанцисем, электричество паракан линисем, МТС т. ыт. те çав объектсем шутĕнче пулмалла.

Тепле пулсан та, тăшман аллине транспорт таврашĕ нимле те лекмелле мар тăвас пулать. Çавăн пирки те ĕнтĕ десант шуса пыни çинчен кӳршĕри пур ялсоветсене те пĕлтерсе тăрас пулать. Ялсоветчĕсем вара автомобильсем, мотоциклсем, велосипедсем, лашасем десант аллине лекмелле мар майсем тупса хураççĕ.

Тăшман çине пĕр чарăнмасăр тапăнса пырса, засадăсем туса тата тĕрлĕрен урăх та чее майсемпе десанта ним юлмиччен пĕтерсе тăкмалла. Çак ĕç мĕн таран ăнăçуллă пулма пултарнине Совет Информаци Бюровĕ августăн 21-мĕшĕнче пĕлтернĕ факт пит лайăх кăтартса парать.

Украинăри К. хулинчен инçех мар вырăнта противник 20 танкеткăран тăракан авиадесант (сывлăшри десант) антарса хăварнă. Капитан Барышников ертсе пыракан истребительнăй батальон тăшманăн 16 машинине çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 4 танкетки çавăрса илнĕ вырăнтан тухнă та Ш. ялĕ патĕнчи вăрманта пытаннă. Тул çутăлас умĕн школьник Вася Чурило вĕсене тупса палăртнă, ун çинчен ялсовет председательне Белоконь юлташа пĕлтернĕ. Çав хыпара район центрне пĕлтерсе, Белоконь юлташ вырăнти электростанцине, телефон станцине тата машинно-тракторнăй мастерскойне хӳтлес ĕçе организациленĕ. Ял вĕçĕнчи йывăç кĕперĕн юписене пăчкăпа каснă та, Криворучко, Коляда, Дубовик, Зубрило тата ытти колхозниксем çул хĕрринчи канавсемпе вĕтлĕхре пытанса выртнă. Вĕсен пурин те бензин тултарнă бутылкăсем пулнă. Часах вăрмантан тăшманăн виçĕ танкетки тухнă, çул тăрăх ял патнелле вĕçтернĕ. Малтанхи танкетка кĕпер çине кĕрсе шыва персе аннă. Ытти икĕ танкетки труках чарăнса тăнă. Вĕсем çине бензин тултарнă бутылкăсем ывăтнă. Темиçе минутăран автомашинăсем çине ларса истребительнăй батальонăн подразделенийĕ пырса çитнĕ, анчах колхозниксем фашистсен танкеткисене тата вĕсен экипажĕсене хăйсен вăйĕсемпех пĕтерсе тăкнă.

Куçса пыракан десанта йĕрлесе хăвалас ĕçе вырăнти халăх кăна тумалла мар. Ку ĕçе авиаци те хутшăнмалла. Вăл тăшмана хуса çитсе пулеметсенчен персе вĕлерет, бомбăсем пăрахса аркатать. Авиациех куçса пыракан десант хăш вырăнта пынине советсен истребительнăй отрячĕсене тĕлесе кăтартса парать. Вырăнти халăхăн задачи—пур майсемпе пуринпе те пирĕн авиацие тата истребительнăй батальонсене пулăшасси пулать.

Вырăнти халăхăн задачи—хамăр авиацине ирсĕр тăшман десанчĕ хăш тĕлте куçса пынине кăтартса парасси. Тепле йăнăшпа тăшман самолечĕсене хамăр самолетсем вырăнне йышăнса пулăшу пани ан пултăр тесе, тăшман ăстине **условнăй знак**—самолет вызовĕ тăрăх кăна кăтартса памалла. Çав самолет вызовĕсем çинчен, вĕсене хирĕç мĕнле майпа ответ памалли çинчен НКВД-н сывăхри истребительнăй батальон штабĕнче пĕлмелле. Çав батальонсемпе таччăн çыхăнса тăрас пулать. Вĕсем вырăнти халăха авиадесантсене хирĕç истребительнăй батальонсемпе пĕрле мĕнле майсемпе кĕрешмелли çинчен кăтартусем параççĕ.

Авиадесанта хирĕç кĕрешес ĕçри тĕп правило—**тăшмана тĕппипех пĕтерсе лартиччен нихăçан та унпа кĕрешме чарăнса тăмалла мар.**

Генерал-майор
М. ФИЛИППОВСКИЙ.

Çĕнĕ кĕнекесем

К. Всеволожский — Хăюллă çичĕ буденновец. Чăвашгиз, 1941 ç. Тираж 2500 экз. Хакĕ 20 пус.

Çак кĕнекере автор граждан вăрçинче пирĕн тăван çĕршыв тăшманĕсене хирĕç С. М. Буденный юлташпа пĕрле паттăрăн çапăçнă геройсем çинчен кĕскен каласа парать. Кĕнекене кĕçĕн çулхи ачасем валли тăларнă.

Л. Савельев — Зимний дворец шмурмлани. Чăвашгиз, 1941 ç. Тираж 3000 экз. Хакĕ 2 тенкĕ.

Çак пысăк мар кĕнекере большевиксен партийĕ хăйĕн геннллĕ çулпуçĕсем—Ленинпа Сталин ертсе пынипе Октябрьти революцине хатĕрлесе, пролетари диктатури туса хуннине кăтартса панă. Кĕнекене вăтам çулхи ачасем валли кăларнă.

А. Фадеев—Амгуньски полк. Чăвашгиз, 1941 ç. Тираж 2800 экз. Хакĕ 75 пус.

Автор граждан вăрçи вăхăтĕнче Инçетри Хĕвелтухăçĕнче пĕр çĕршыв военщинине хирĕç хăй çапăçнă. Çак кĕнекере вăл Амгуньски полкăн геройла ĕçĕсем çинчен çырать. Кĕнекене аслă çулхи ачасем валли куçарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5124. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 490. Ф. б. 58 × 84 п. л.